К С(чув)
К 96
338574-чув

# Н·К·КУШМАНОВ

# КОКЕЛЬ

*поэма*

Национальная библиотека ЧР
4-033854

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 96

Н. К. КУШМАНОВ

# КОКЕЛЬ

*поэма*

92

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1992

ББК 84 Чув 7-5
К 96

ПРОВЕРЕНО
20 10

**Кушманов Н. К.**

К 96 Кокель: Поэма.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.— 128 с.

Поэмăра чăваш ялĕнче — Турханта — çуралса ӳснĕ çĕршывĕпех, тĕнчипех паллă А. А. Кокель художник-профессорăн йывăр та пархатарлă кунçулне сăнласа панă.

**ББК 84 Чув 7-5**

К $\frac{4803710202-36}{М\ 136(03)-92}$ 46—92

3385 Чув

ISBN 5-7670-0595-8

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1992 ç.

*Валем Ахуна хисеплесе*

## УМĔН КАЛАНИ

Манми Турхан, çуралнă ялăм,
Асран кайми вăрманлă ен,
Илемлĕ эс, иртен-çӳрен
Сана савса пуç тайĕ танлăн.

Сăртри тавралăха тинкернĕн
Вырнаçнă эсĕ лапамра.
Чĕрçӳ çинче пире сиктернĕ,
Чуна эс çывăх ачаран.

Нумай çынна эс кун кăтартнă.
Талантлă ывăл-хĕрӳсем
Сана кирек-хăçан юратнă,
Сыхланă хĕн кунсем çитсен.

Хĕрӳ чĕреллĕ поэтпа,
Андреевпа мала утатăн

Е композитор Петровпа
Илемлĕ юрă шăрататăн.

Кутузов генерал пупленĕ
Ача чухне санпа ялан.
Ăна Турханăн сиплĕ енĕ
Вăй кӳнĕ ăнтăлма мала.

Мĕн чул ĕçчен пăхса ӳстертĕн,
Асран кайми çуралнă ен.
Кашнийĕшне телей пиллерĕн,
Кунçул шăвать кал-кал вĕсен.

Енчен те эс кунта пулсассăн,
Хисеплĕ, хаклă вулакан,
Ял музейне кĕрсе курмасăр,
Ыйтатăп: каялла ан кай.

Вăл, лапамра, шкул çумĕнче
Вырнаçнăскер, йыхрать ăшпиллĕн.
Чылай ята хăй асĕнче
Упрать.
Манмасть-ха каçăн-ирĕн.

Эппин, кĕрер-хаваскамасăр
Çак икĕ пӳлĕмлĕ çурта.
Экспонатсем пăхар шăв-шавсăр,
Итленĕ май умри гида.



## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

### 1891 çул. Выçлăх çулĕ

Инкек тискеррĕн хуçаланнă
Кашни ялта, кашни килте.
Пĕр хĕрхенӳсĕр вăл сăрланă
Хура тĕспе чылай пите.

Умри сăнсем ытла хăрушă:
Виле, виле çине-çине.
Хуçийĕсем — масар çинче.
Çуртсем пит тăлăх та пуш-пушă.

Чиркӳ янравĕ — чан сасси те —
Кĕтсе илмест чылайăшне.
Ăсатнă ял хапхийĕ витĕр
Асапланса вилнисене.

Хресчен турра пит тархасланă:
«Çак тамăкран мана çăлсам!»
Анчах илтмен леш, çил уланă,
Выç кашкăр евĕр хăратса.

Пĕртанлăх, туслăх тенине те
Нумайăш чухласах кайман.
Кун пек пулсан, епле çĕнетĕн
Хăв пурнăçна тĕпрен, тăван?

Пуян выç куçлă пулнă тетпĕр,
Аса илсе çав вăхăта.
Пĕчченлĕхе ĕненнĕрен-тĕр
Ĕçчен хĕн курнă-çке пайтах.

Лупасĕ, лаçĕ е кив пӳрчĕ,
Йăлт улăмпа витнĕскерсем.
Çаплах ăна сехмет çеç пӳрнĕ,
Аран пурнать йӳнеçтерсе.

Ăçта ан пăх: вĕри куççулĕ,
Ăçта ан пăх: тăлăх-турат.
Нушаллă-тертлĕ çын кунçулĕ
Пĕр улшăнми саманара.

Çаплах шăпи-хуйхи чăвашăн
Ламран-лама куçса пырать.
Кирек хăçан йăхне тăсасшăн,
Кирек хăçан шанать ырра.

Е кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шуххăн
Çуралнă халăхра, пĕтмен!
Упраннă вĕсенче пин шухăш,
Хистенĕ хĕн-хура çĕнме.

Мĕн чухлĕ ятсăр-сумсăр юрăç.
Художник, сăвă çыракан.
Кашнин пит хĕсĕк пулнă пурнăç —
Амсанчăксем-çке çул паман...

Ун чух вăл вунпĕр çул тултарчĕ,
Тавах, вилмерĕ выçлăхра.
Анчах ури пит шыçнăран
Хура пӳртрен тухмасăр ларчĕ.

### Пылчăккассинче

Халь паллашма та вăхăт çитрĕ
Тинех, ак, пирĕн Лекçейпе.
Ачи йăваш, анчах та чирлĕ,
Пит палăрмасть вăй-халĕпе.

Хура çӳçне шакла кастарнă,
Ан пыйтăлантăрах тесе.
Салху куçĕсенче пытаннă
Ачалăхăн ĕмĕчĕсем.

Кассан, юн тухмĕ тенĕ евĕр,
Сăн-пичĕ питĕ шуранка.
Çуралнă та курмасăр евĕк —
Вăл пурăнать, мĕн тăвăн-ха?

Килте Лекçей тесе чĕнеççĕ,
Ача-пăча урăхларах:
«Уксах» е «Кукăль» йĕкĕлтеççĕ,
Вăййа хутшăнманран пачах.

Удел шкулне çӳрет типтерлĕн,
Кĕçех ăна вăл пĕтерет.
Ерçӳллĕ чух тăвать ӳкерчĕк,
Асталăхĕ куллен ӳсет.

Вĕсен касси тӳлек, йăмраллă,
Анчах шыв-шурлă, лачакаллă.
Тулли лавпа лакса ларсан,
Миçе хут тĕнĕл хуçăлман?

Миçе хутчен хресчен ылханнă
Ҫунти çулпа иртсен аран.
«Пылчăккасси» тесе ят панă
Ҫак урама юратманран.

Юнашарах Шлипшур çырми те
Нӳрĕклĕхне шавах сарать.
Урамĕ айлăмра çав питĕ,
Ҫулла та сулхăн çеç тăрать.

Ҫирек хăçан та сивĕ сывлăш
Е сĕр-сĕрлет шăна-пăван.
Чире пула Лекçейĕн сывлăх
Ҫунта хавшанă ачаран.

Ват çын шăмшакĕ евĕр туйнă
Йĕпе-сапаллă кунсене.
Хăрах ури пит шыçнă унăн,
Ҫичемлĕх пуснă чĕрине.

Ҫапла пулин те, çамрăк Ҫокель
Хăй вăхăтне сая яман.
Ҫӳрши анкартине тăксан кĕл,
Васканă унталла аран.

Йывăрлăхра вăй-хал çитернĕ
Сирсе пыма чăрмавсене.
Вăл кăмрăкпа куллен ӳкернĕ
Ун чух хăма татки çине.

Терт тӳснĕрен ҫав ытлăн-ҫитлĕн
Ăшпиллĕхе пачах курман.
Хура кив ҫурчĕ те — чăн читлĕх—
Сыв мар ҫынна ниҫта яман.

Самайлансан, ҫухатнă канăҫ,
Шлипшур юханшывне пăхса.
Шур хут листи ҫине сăнланă,
Ун юххине кăмăлласа.

Вăл сиснĕ, ҫын, чирлет пулин те,
Лайăххине кĕтмеллине.
Ҫак шыв та, ав, чăрмавлăх витĕр
Еплеваскать Пăла енне.

## Шкулта

«Ку чирлĕ Лекҫейрен кураймăп
Ӳсессĕн те пархатарне.
Ҫайран мана ан тутăр айăп,
Вĕрентĕр хăть ҫыру ĕҫне.

Телейсĕр-ҫке хресчен кунҫулĕ
Хутла пачах тĕшмĕртмесен».
Ҫак шухăш тĕвĕленчĕ пулĕ
Ун ашшĕн пуҫĕнче куллен.

Тул ҫутăлсан, апатлансассăн,
Ача пир сумкине ҫакать.
Унтан пĕччен, пит васкамасăр,
Шыв хĕрринчи шкула утать.

Унта ларать пĕр чалăш ҫурт,
Вăл туйăнать кĕҫ йăванассăн.
Ват ҫын пек тӳснĕн вăл терт-хур
Шыв юххине сăнать йăвашшăн.

Ӗк алӑк, икӗ пӗчӗк пӳлӗм,
Виҫ чӳрече кашниййӗнче.
Хӗлле лармашкӑн кирлӗ тӳсӗм,
Ҫил шӑхӑрать ҫурӑксенче.

Ҫапах та вӑл пӗлӳ вучахӗ,
Кашни ачашӑн савнӑ кил.
Аш илӗртӳлӗхӗ ун чакмӗ,
Куллен-кун йыхӑрать пек: кил!

Чӑвашсемпе, ав, ӗренеҫҫӗ
Ирҫе те вырӑс ачисем.
Юнашарти ялтан килеҫҫӗ
Арапуҫсем те шӑхачсем.

Ялти «ӗтурасен ҫарпуҫӗ» —
Анаткасри шух Тиххӑн та
Лекҫейпеле ларать шкулта —
Ачалӑхри чи ҫывӑх тусӗ.

Тӑрӑхласа ят парасси те
Ялта йӑл илнӗ ачаран.
Витлев сӑмах таҫта та ҫитӗ,
Мӑн ҫын та хӑпаймасть унран.

Тус-юлташне чӗнеҫҫӗ: Уҫӑп.
Хӑйне те Кукӑль теҫҫӗ шав.
Ятсем хушамата та куҫӗҫ,
Хӑть эс ӑна хурла, хӑть сав.

Пӗр-пӗр пуҫтах кӳрентерсессӗн
Вӑйсӑртарах ачасене,
«Утамана» евитлесессӗн,
«Тӑн панӑ» леш айӑплине.

Шăнкрав янрать те — йăрăс пӳллĕ
Сергей Ильич класа кĕрет.
Паян ун кăмăл çĕкленӳллĕ,
Килти ĕçе вăл тĕрĕслет.

Доска умне чĕнет ăшпиллĕн:
«Тух, Афанасьев*, ан вăтан».
Леш сăввине калать аван.
«Маттур, маттур, лартатăп «пиллĕк».

Ачасене сĕнет: «Вĕренĕр
Пур предметпа Лексей пекех.
Пĕлӳ пулсан, мана ĕненĕр,
Кунçул тĕллевлĕ, хитререх».

Унтан пуçлать вăл васкамасăр
Анлантарма çĕн темăна.
Итлеççĕ ачасем пĕр сассăр,
Çапла ăс-хакăл пухăнать.

Тăхтав вăхăтĕнче шăв-шав çеç
Куллен кĕрлет картишĕнче.
Шух ачасем пит тупăшаççĕ
Пĕр-пĕринпе вăйăсенче.

Ула-чăла пиртен çĕленĕ
Тумтир кашниййĕнех вĕсен.
Улт пушăтран çăпатисем,
Анчах та çĕнĕ мар, кивĕлнĕ.

Лексей кунтах, сывлать вăл ассăн,
Йăмра çумне пырса ларать:
«Эх, ман сиккелесе вылясчĕ»,
Анчах ура шыççи чарать.

---

* Ялта чухне А. А. Кокель Афанасьев хушаматпа çӳренĕ.

Хĕвел çинче йăл çиçтереççĕ
Шкул ачисем саплăксене.
Шăнкравччёнех тĕрткелешеççĕ,
Манса кайса выçварлине.

Чăтма çук йывăр пурнăçра та
Ачалăх вăл ачалăхах.
Çак кунсене умра куратăн,
Ӳсессĕн те вĕсем асрах.

Сергей Ильич Очков учитель,
Чĕмпĕр шкулне пĕтернĕскер,
Лекçей ăсне кӳрет çĕн витĕм,
Хавхалатать ялан: ӳкер.

Хăйне нихçан мăнна хумасăр,
Сукмак хывать ача чунне.
Ĕçлет вара хăй лăш курмасăр,
Уçать пĕлӳлĕх тĕнчине.

Вĕрентекен! Эс кирек камшăн,
Кирек хăçан та — Гиппократ.
Çут тĕнчери чи сумлă ят,
Ача-пăчашăн тăрăшатăн.

### Ĕмĕтпе чăнлăх

«Хĕл хырăмĕ апшур»,— каланă
Чăваш çынни мĕн авалтан.
Ĕмĕрĕнче курман вăл канăç
Чунпа хавшаклă пулнăран.

Ĕçе уйăхсене те «кӳлнĕ»,
«Ака», «Çурла» ятсем парса.
Ана çинче тар тăкнă, тӳснĕ,
Суха туса, кĕлте çыхса.

Ĕмĕчĕсем çеç шутсăр ырă:
Хур-кăвакал картиш тулли,
Аш витере ĕне те сурăх,
Ķĕлетĕнче тырри, хăмли.

Ķуç савăнмалăх пурлăх, курччĕ:
Тăпăртатса тăрать лаши.
(Çук, кирлĕ мар ăна пушши)
Чусран хуралтăсем те çурчĕ...

Эх, ĕмĕт, ĕмĕт. Чун йăпатмăш,
Санпа çеç кăмăл çĕкленет.
Хресченшĕн эс, чăнах, тухатмăш,
Ķурайĕ-ши вăл ырлăхне?

Ялан ăнса пулмасть тырпулĕ,
Ик-виçĕ чăх картишĕнче.
Ырхан лаши кавлет тип улăм,
Утти пач çук лупас çинче.

Ķилте ачи йĕрет: пит выçă,
Аптранипе пўрне ĕмет.
Вулăсрисем пуçтарнă хырçă,
Татах ыйткалама тивет...

— Лекçей, итлес килет-и санăн
Ķукkуклă сехете?
— Аçта?
— Пур тĕкĕр,—Тиххăн шахвăртать,—
Хăв сăн-питне пăхма пултарăн.

Ăна юлташĕ питваскатрĕ:
— Ан йăралан, тумлан часрах.
— Суятăн пулĕ?
Леш каларĕ:
— Манпа пырсан — хăвах куран.

Вĕсем хыпаланса утаççĕ
Ял варринчи шатрун çурта.
Ку вулăс пӳрчĕ-ха, хальхаççăн
Хресченĕ татăлмасть унтан.

Шалта чылаййăн.
Хăр-хăр сасă,
Ăна илтсен, чӳн сӳлетет.
Çынсем тăраççĕ каласмасăр,
Кунтах Лекçейĕн ашшĕ те.

Чăнах та, тĕлĕнтермĕш мар-и,
Куккукĕ авăтать пӳртре!
Тав Тиххăна, улталамарĕ.
Çут тĕкĕр те пур кĕтесре.
Уретник вĕсене курсассăн
Кăтартрĕ алăк хăлăпне.
«Пошел! Пошел!» — тесе усаллăн
Хӳтерчĕ вăл ачасене.

Пĕлес килет: мĕн-ма уретник
Ачасене кĕртесшĕн мар?
«Пăхма пулать чӳречерен те»,—
Ик тус тухаççĕ урама.

Çут кантăкран вĕсем сăнарĕç
Шалта мĕскер хăтланнине.
Унта саламатпа юнарĕ
Хаяр уретник çынсене.

Пĕрне вăл çапрĕ те çиллессĕн:
«Хăçан куланайна тӳлен?»
Хресчен, хăравçăскер, эрленнĕ:
«Парса татап, кăшт вăй илсен».

— Эх, манӑн хӑвӑртрах ӳсесчӗ,—
Ҫалать кӗҫ Тиххӑн юлташне.—
Хисеплеменшӗн ҫынсене,
Хӑйне, хӑйне тытса силлесчӗ.

(Ун шӑпипе паллаштарасшӑн
Хисеплӗ вулаканӑма.
Ӳсессӗн, салтака кайсассӑн,
Вӑл пӗлнӗ чӑнлӑхшӑн тӑма.

Самара хулинчи пӑлхавшӑн
Сив Ҫӗпӗрти катӑркӑра
Улт ҫул тӳр килнӗ терт курмашкӑн,
Ҫайран вӑй хунӑ Донбасра.

Юп куртӑр, тенӗ, ӗҫлӗ халӑх,
Ҫӗрешнӗ тӗрлӗ йӑх-яхпа.
Хал ҫитнӗ паларса тӑмалӑх
Чӑтӑмлӑхпа, хӑюлӑхпа.

Ҫӗрешӳҫсен ретне тӑрсассӑн,
Пӗрмай ӳстернӗ пӗлӗвне.
Ҫив пурнӑҫа тӗпрен кӑкласшӑн
Пӗрре те шеллемен хӑйне.)

Чышкисене вӑл чӑмӑртанӑ,
Уретнике хытах юнать.
Лексей те, ыйхӑран вӑраннӑн,
Ҫуҫне-пуҫне чарса пӑхать.

Леш, хаярскер, выҫ куҫ, хуптарчӗ
Ик-виҫ ҫынна хурал пӳртне.
Ҫайран та чылайччен хӑмсарчӗ
Саламатпа хресченсене.

Лекçейĕн ашшĕ Ахваниç те
Ыттисемпе тухать пӳртрен.
Сăн-пичĕ ун шуралнă питĕ,
Алли-ури тăр-тăр чĕтрет.

Ана курсан, Лекçей тĕпчерĕ:
«Уретник мĕншĕн пит усал,
Тăр-кăнтăрлах çынна хĕнерĕ,
Тăратăр пурте хăраса?»

«Ӳсессĕн, ывăлăм, ăнланăн,
Тӳлемелле-çке куланай.
Ана йăлтах парса татмашкăн
Тертне куратпăр яланах...»

Çак сăнарсем вырнаçрĕç хăвăрт,
Ыраттарса чун-чĕрене.
«Кунçул, хресченшĕн ма эс тăвăр?»—
Лекçей шеллерĕ ашшĕне.

### Лашман хресченĕсем

«Вăрман улпучĕ» тенĕ ĕлĕк
Чăваш—вăрман тытакана.
Ана курсассăн хывнă çĕлĕк
Ватти-вĕтти аякранах.

Кунта Левченко хуçаланнă,
Кирек хăçан хăй çеç тӳре.
Никамăн та çук ыра шанăç
Айăплансан тухма тӳрре.

Кил-тĕрĕшре пурне те кирлĕ
Вутти, утти, кăмпи, çырли.
Анчах та вăл сыхлать пит тимлĕн
Пуянлăхне пĕр хăй валли.

Вăрманĕ, чăн та, питĕ аслă,
Вĕçрен вĕçе çын тухас çук.
Ҫашлаççĕ йывăççем мăнаçлăн
Хунав ярса çул хыççăн çул.

Ҫĕреш юманĕсем пит çирĕп
(Ҫарап тума юрăхлисем).
Хĕн-хур кураççĕ каçăн-ирĕн
Ҫунта лашман хресченĕсем.

Ах, ĕçĕ! Ҫанăççăр та йывăр,
Ал вăйĕпе çеç тунăран.
Мĕн чухлĕ кирлĕ тӳсĕм, сывлăх,
Пичке тумашкăн юманран.

Ăна кăкран касса яма та
Виçеллĕн, тикĕссĕн çурма,
Типсен, унтан хăма тума та,
Чăнах, пĕрре те çăмăл мар.

Анчах та унăн чапĕ кайнă
Аçтăрханран Париж таран.
Ҫак тавара савса туяннă
Йӳн хакпала купса тавраш.

Улатăра ярсах тăраççĕ
Хăмаллă лавсене куллен.
Ҫунтан васкавлăн ăсанаççĕ
Чугун çулпа инçетелле.

Лекçейĕн пиччĕшĕ Иван та
Ҫĕрĕшрĕ лашмансем патне.
Аслисемпе ĕçлет пĕр тан вăл,
Кăштах пухăсшăн укçине.

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА



33854 чув

Хура пӳртне часрах пӑсасшӑн,
Ун вырӑнне ҫӗнни лартса,
Ӑаштах ҫын евӗр пурӑнасшӑн.
Тӑрать ҫак шухӑш вӑй парса...

Апат леҫме куллен чупаҫҫӗ
Ял ачисем ҫаруранах.
Лекҫей те Тиххӑнпа хальхаҫҫӑн
Ӑайсах тӑраҫҫӗ вӑрмана.

Ӑунта аван-ҫке, тӗрлӗ кайӑк
Шӑрантарать, ав, юррине.
Уҫ сывлӑшпа киленнӗ майӑн
Пухаҫҫӗ пурте ҫырлине.

Ҫӗр айӗнчен тапать ҫӑлкуҫӗ,
Ҫӗн кӗвӗллӗн шӑнкӑртатать.
Ӑанмасӑр авӑтать куккукӗ,
Ӑӑмпи, пултранӗ: пух, тет, тат.

Вӑрман касакансен сӑн-пичӗ
Ачасене курсан хавас.
Хӑйсем ӗшеннӗ мар-и питӗ,
Шӳтлеҫҫӗ пурӗпӗр час-час.

— Хӑҫан-ха, Тиххӑн, авланатӑн?
Чупатӑн пуль улахсене?
— Шур пир ҫине, тен, куҫаратӑн
Лекҫей, эс сарӑ хӗр сӑнне?

Сартутлӑ Тиххӑн чӑрсӑр мар-и:
Сӑмахшӑн каймӗ кивҫене.
Виҫ ҫыншӑн та хурав вӑл парӗ,
Хӗретӗ хӑй сан сӑн-питне:

— Халь иртерех-ха, ёлкёретпёр,
Пулас хёрсем хуп сăпкара.
Часрах ÿссе çитесчĕ тетпĕр,
Ытти пурнăçланать кайран.

Çак эртелте ик тус паллашрĕç
Сар вырăспа та ирçепе.
Хура тутарĕ те каласрĕ,
Вăй илчĕ туслăх майĕпен.

Пĕр-пĕринпе ялан пайлаççĕ
Кил апатне те хурлăхне.
Хура вăрман шавлать ир-каçăн
Сăнанă май çынсен ĕçне.

## Левченкăпа паллашни

Çу кунĕнче Лексей юратнă
Чечеклĕ çарана, хире.
Уйра ларан пĕччен юман та
Патваррăн курăннă, хитре.

Пучамасри варсем, çăлкуçĕ,
Хĕвелĕн çутинчи вăрман
Е варкăш çилĕ ăшшăн, уççăн
Пите сĕртĕннĕ чух аван.

Эй, çутçанталăк! Вăй-хаваллă
Хĕлле, çулла — кирек хăçан
Çынна паратăн эс хаваслăх,
Ăна мал ĕмĕтлĕ тăван.

Пулсан та самани пит йÿçĕ,
Лексейшĕн эсĕ — ыр анне.
Черчен чунне кÿретĕн тÿсĕм,
Пиллетĕн хăвăн илемне...

— Ҫилте юлмарӗ типӗ шанкӑ,—
Тет ашшӗ икӗ ывӑлне,
Хӗл вуттине тытма халь шалккӑ,
Ҫаймах тивет пуль вӑрманне.

— Ҫӗркурие, Лекҫей, итле эс,
Ан ашкӑнӑр унта вутпа,—
Хушать те Ахваниҫ хуллен ҫеҫ,
Ҫӗҫ шӑлтӑртатрӗ урапа.

Анчах кӑвайт пуҫтарнӑ чух
Лекҫей Левченкӑпа тӗл пулчӗ.
Тарма хӑтланчӗ, лешӗ кулчӗ:
— Эс улпутран тараймӑн, ҫук!

Аҫу-аннӳ сан кам? — тӗпчерӗ.—
Кам хушрӗ йываҫа хӑртма?
(Кусем пӗр хунава хуҫман.)
Чӗнместӗр? Каластарӑп! — терӗ.

Вӑл илсе кайрӗ иккӗшне те
Ял хӗрринчи шатрун ҫуртне:
— Ик кун ман патӑмра ӗҫлетӗр!—
Лешсем тӑрмашрӗҫ каҫченех.

Тепӗр кунне те тёмӗнччен
Лекҫей пиччӗшӗпе ӗҫлерӗ.
Ҫаннӑ чухне часах ӳкерчӗ
Ҫак вырӑса тетрадӗнче.

Сӑрларӗ вӑрттӑн, систермесӗр
Вӑл тройкӑпа пынисене.
Ун чаплӑ пысӑк керменне
Ӳкерчӗ вӑл хитрелетмесӗр.

Анчах та Левченко вăрманçă
Ача ăна ÿкернине
Курсассăн пит аванмарланчĕ,
Мухтарĕ вăл Лекçей ĕçне.

Тен, ĕненмерĕ те çак вăйсăр,
Ыран-паян вилес ача —
(Унран кĕтмен те вăл пачах)
Астаçă, чунĕпе те кăйкăр!

Улпут, улпут, çынран сăлтавсăр
Чылай эс кулнă вăрманта.
Тăрать умра ача пĕр сассăр,
Чуну çемçелчĕ-ши кăштах?

Паллах, эс йĕрĕннĕ те пулĕ
Çак çăпаталлă çынсенчен!
Пĕрремĕш хут ăнлантăн, тен:
Чунĕсенче вĕсен пур мулĕ!

Лекçейпеле паллашрĕ хăвăрт,
Çÿре эс терĕ хăнана.
Вăтанчĕ ку, туятăр хăвăр:
Вăрманçă хисеплет ăна!

Ун мăшăрĕ ялан хистерĕ
Ана пулăшмалли çинчен.
Чирлĕскере кăшт-кашт сиплерĕ,
Ача сывалчĕ майĕпен.

## Путланнă ĕмĕтсем

«Сыв пул, ăс пană, савнă шкулăм,
Кунта вĕрентĕм эп аван.
Мухтав хутне те тивĕç пултăм,
Халь Чĕмпĕре çул уçă ман»,

Сергей Ильич пит хисеплерӗ:
«Вӗренмелле, Лекҫей, татах.
Аҫупала калаҫӑп,— терӗ —
Учителе сан тухмаллах».

Ҫапла хаваслансах пӗлтерчӗ
Лекҫей юратнӑ ашшӗне:
«Кӗркури пек ман вӗренесчӗ,
Каясчӗ Чӗмпӗр хулине».

«Ӑс пухӑр»,— тенӗ Ахванисӗ,
Ачисемпе сӑмахласа.
Вӗсем куллен пӗлӳ илнишӗн
Ун чунӗ тӑнӑ савӑнса.

«Иван — асли — вӗренеймерӗ,
Пулас пулать ун ман тӗрек.
Ҫапах пӗртте ӳпкелешмерӗ,
Вӑл кӳленчӗ ӗҫе ирех.

Унпа та канашлас-ха,— терӗ,—
Мӗн сунӗ кӗҫӗн шӑллӗне...»
Ҫӗртме ҫитсен, васкавлӑн леҫрӗ
Ик ывӑлне чӑваш шкулне.

Анчах усал хыпар кӗҫ ҫитрӗ
Турхан ялне ҫут Чӗмпӗртен:
«Лекҫейӗм, шӑллӑм, питӗ чирлӗ»,—
Ҫыру килет Кӗркурирен.

Ана илмешкӗн ашшӗ кайрӗ
Лаша кӳлсе чӑваш шкулне:
«Учителе, шел, тухаймарӗ»,—
Хӗрхенчӗ ашшӗ ывӑлне.

Ачан тӗллевӗсем путланчӗҫ:
«Ма ӑраскал ман майлӑ мар?»
Ҫак шухӑшсем ӑша ӑркатрӗҫ,
Килте ӑрах сывалнӑ май.

«Хам тӗллӗн ӳкерме ӗренӗп,
Ӳркев ан пустӑр ӗреме.
Кил-тӗрӗшре кӑшт ӗҫлекелӗп,
Чӑн тӑвӑпах ӗмӗтӗме...»

Самайлансан, кӗтмен пачах,
Ана хирте Левченко курчӗ.
Тӗлӗннӗскер, ӑрман улпучӗ
Ыйтать: «Алеша, эс ялтах?

Иван эс Чӗмпӗрте-ҫке терӗ.
Эп шухӑшлаттӑм: ӗренен.—
Кӑсӑкланса чылай тӗпчерӗ:
Килте, эппин, чирленӗрен?..»

Кӑштах тӑрсан, чӗнет хавассӑн:
— Айта пӗрле, ларар часрах.
Сана эп парнесем парасшӑн...
— Тавах.
— Ана калан кайран!

Ҫил кӑларса утсем тапранчӗҫ,
Умра чӑрмав ӗсемшӗн ҫук!
Пулсан та сакӑлталлӑ ҫул,
Кӗҫех уя хыҫа хӑварчӗҫ.

«Айӑрӗсем епле маттур ун,—
Шутлать Лекҫей хӑй ӑшӗнче.—
Каймасть пуль сӗлӗ умӗнчен,
Кун пеккисем ялта ҫук урӑх».

— Ак çитрĕмĕр! Мамаша, тухăр
Кĕтсе илме хăнасене!
Кĕç лăпкă калаçу çеç юхрĕ
Пӳртре, ларсан диван çине.

— Петербургра чухне туянтăм
Мольберт та тĕрлĕ сăрăсем,
Картинăсем, учебниксем,
Кусем, Алеша, пурте санăн.

Ача пĕр тĕлĕнчĕ, хумханчĕ,
Улпут парнисене курсан.
Чун-чĕринче хĕлхем вăйланчĕ:
— Спасибо,— терĕ савăнса.

Вăл тĕлленмен-çке тĕлĕкре те,—
Мĕн чул пуянлăх умĕнче:
«Картинăсем кĕç ӳкеретĕп,
Аван тухать шур хут çинче».

Вăрман улпучĕ паллаштарчĕ
Кардовский, Репин ятсемпе.
— Чăн-чăн художник,— ăнлантарчĕ,—
Утмасть нихçан çын çулĕпе.

Кирек хăçан та вăл хăй тĕллĕн
Тĕпченĕçем шырать сăнар.
Чунра янрать пулсассăн хĕлĕх,
Ун сассине эс ан чакар.

Çак шухăшсем, тен, сапаланчăк,
Асрах тыт эп каланине:
«Савать искусство ĕçчене,
Нихçан ан пул пит хыпаланчăк.

Кашни картинăри тĕп шухăш
Çын кăмăлне пăлхантарса
Е çутă туйăм вăратса,
Тĕллев патне чĕнейтĕр шуххăн».

Çакна Лекçей куллен ăнкарчĕ,
Улпут каланине манмарĕ.
Нумай çĕн сюжетсем тупса,
Ÿкерчĕ вăл хавхаланса.

### «Турă палăрăшĕ»

Васкарĕ вĕçленме кив ĕмĕр,
Çĕнни вăй илчĕ майĕпен.
Малта ялтрарĕ çутă ĕмĕт,
Çывхарчĕ шуçăм пек куллен.

Унта-кунта хресчен пăлханчĕ,
Хаяр нуши хистенĕрен,
Асаплă пурнăç хĕснĕрен.
Çапах инçе-ха кĕтнĕ шанчăк.

Васкарĕ вăхăчĕ. Лекçейĕн
Пĕр шухăш çеç халь пуçĕнче:
«Епле пулсан та вĕренесчĕ,
Анчах çул хупă пур енчен».

Тавах Левченкăна, ĕненчĕ
Ачан сăрлас ăсталăхне.
Художник мар—унпа хĕмленчĕ:
Кăтартрĕ хăй мĕн пĕлнине.

Вăл Ивана та вырнаçтарчĕ
Часах чиркÿ хураллама.
Çĕн çурт тума вăрман кăларчĕç,
Улпучĕ пулăшрĕ самай.

«Атте-аннемшĕн тăрăшасчĕ,
Ӳсесчĕ сывă та патвар.
Вĕсемшĕн манăн пулас марччĕ
Куллен-кун ытлашши çăвар».

Хресчен ĕçне юрăхсăртан
Лекçей ир-каç çапла шутларĕ.
«Атте ĕнси çинче-и ларăп,
Ан пултăрччĕ кун пек нихçан...

Чим... Турăш чиркӳре юлмарĕ,—
Тесе кларĕ-çке Иван.—
Ăна хресченсене сутмашкăн
Кӳрсе килетчĕç, тет, таçтан».

Пултарăп-ши? — Лекçей ӳкерчĕ
Турамăшне картон çине.
Чĕп-чĕрĕ сăн куçран тинкерчĕ
Мухтанă пек ача ĕçне.

«Тете, тете, тен, уйăратăн
Эп тунине чăн турăшран?»
Леш тĕлĕнет: «Хăвах сăрлатăн?
Куна сутма пулать, ара...»

Пуян çынсем ыйтнисене те
Лекçей куллен-кун пурнăçлать.
Вырсарникун вĕсен сăнне те
Мольберт умне лартса сăрлать.

«Ку турă палăрăшĕ»,— теççĕ
Турра ĕненекен çынсем.
Кăштах килет тин укçа-тенкĕ,
Тата килет чăн-чăн хисеп.

Асилтерет вӗсен кил-ҫурчӗ
Художниксен мастерскойне.
Сӑмах ҫӳрет: «Чылай хӗн курчӗ,
Ҫапах шанать хӑй ӗмӗтне».

Ҫапла Лекҫей ялтан тухмасӑр
Куллен туптать ӑсталӑхне.
Ҫулсем шӑваҫҫӗваскамасӑр
Кичем, кив ӗмӗр сӗмлӗхне.

## 1899 ҫул. Мӑян ҫулӗ

Хуҫаланать хура элчелӗ
Татах Турхан тӑрӑхӗнче.
Хӗнрен тухайӗ-ши хресченӗ?
Чир-чӗр асать, ав, ялсенче.

Ҫанталӑк типӗ тӑчӗ, шӑрӑх.
Хӗвелӗ хӗртрӗ ҫӗр питне.
Хӑруш хыпар ҫӳрет ял тӑрӑх:
«Пӑвать кӗҫ выҫлӑх кашнине».

Ана ҫинче пуш пучахсем ҫеҫ,
Ҫумкурӑкӗ йӗри-тавра.
Вилес килмест-ҫке, тӑвансемӗр,
Тухасчӗ сыввӑн тамӑкран.

Лекҫей яш каччӑ халь, анчах та
Чирленӗрен килтӗн тухмасть.
Сынсем пуплеҫҫӗ шав: «Чӑнах та,
Ҫак сывлӑхпа хӗл каҫаймасть.

Левченко та тухса, ав, кайрӗ,
Пурнать, тет, вӑл Полтавӑра.
Ана улпут пулӑшкаларӗ,
Тухайӗ-ши ҫак асапран?

Автансӑр ял енне пуль ҫулӗ,
Тур ҫырнинчен иртеес ҫук.
Сипленӗшӗн, тет, кирлӗ мулӗ,
Анчах вӑл Ахванисӗн ҫук».

Этем, вилессине сиссен те,
Ҫут ӗмӗте шанать ялан:
«Часах эп самайланӑп»,—тет те
Ыр шухӑшне ҫеҫ пит хаклать.

Ҫак ӗмӗт Лекҫейре упранчӗ,
Кичемлӗхе пӗрмай сирсе.
Асталӑх унӑн аталанчӗ,
Йывӑрлӑха, чире ҫӗнсе.

Малашлӑха савса ӳкерчӗ
Ашшӗпеле хӑй портретне.
Сӑна-ха тимлӗн вӗсене:
Унта мӗн чул кун ҫулӑн терчӗ.

Ав, пиҫӗк куҫлӑ Ахваниҫӗ
Пӑхать, хӗне парӑнманскер.
Унпа хресчен ҫулне эс виҫӗн,
Тӑрать тӳп-тӳрӗ, вӑйлӑскер.

«Ҫук, кирлӗ мар укҫа та енчӗк»,—
Шутлать Лекҫей сӑрланӑҫем.
Искусство тӳпине ҫӗкленчӗ,
Мал ӗмӗтне чӑн килтерсе.

Хӑш чух, халтан кайсан, йӑванчӗ
Пӳртри кутник сакки ҫине.
Вӑй пухӑнчӗ. Пӗтмерӗ шанчӑк.
Ӳкерчӗ вӑл Турхан ялне.

Анчах выртса тăма пуçларĕ:
«Хăпсам, хăпсам эс, чир, манран!»
Хăй лартнă йăмрасем кашларĕç,
Тавралăх курăнчĕ хуран...

Çу кунĕсем хыçа ăсанчĕç,
Хĕмне ытлашшипех тăкса.
Поляк Раубе — çĕн вăрманçă
Турхан ялне çитет часах.

Унпа пĕрле врачсем те килнĕ,
Хресченсене çăлас тесе.
Çуртсем чылайăш пушă: вилнĕ
Усал чире пула çынсем.

Ялти çак хыпара илтсен,
Улпут çуртне Иван васкарĕ.
Хыпаланса вăл тархасларĕ:
— Сыватăр Лекçее чиртен...

Врачсем калаçрĕç те шӳтлерĕç
Хура пӳртри яш каччăпа.
Самайлансан, леш тĕлĕнтерчĕ
Ăс-халĕпе каярахпа.

«Чăн-чăн кĕтрет-çке ку!— шутларĕç,—
Çак тĕттĕм, мĕскĕн выранта
Епле талант ун аталаннă?
Картинисем епле тата?!»

Варганова Мария терĕç
Çак ушкăнри пĕр сар хĕре.
Улпут тăванĕ, вăл хистерĕ:
— Пăрахар мар ăна хĕнре.

Ытла та чухăн тăрăхра
(Чугун çул утмăл çухрăмра)
Юлсассăн, ун сӳнет таланчĕ,
Илсе кайсан, чăнах аванччĕ».

«Ăна пулăшмалла халь пирĕн,
Епле пулсан та çăлмалла.
Петербургра сыватмалла»,—
Қашниййĕн шухăш пулнă çирĕп.

«Пăрахмăпăр»,—тесе шантарчĕç
Врачсем çине-çинех ăна.
Юлашки кун та, ак, çывхарчĕ,
Çук, манмĕ Қокель çав куна.

Çук, манмĕ Қокель çав куна,
Ун умĕнче тинех çул уçă!
Тĕллев те ун пĕрре кăна:
«Чăвашсене кӳресчĕ усă».

Турханăн йăмрисем ал сулнăн,
Çил вĕрнĕ май пăшăлтатса,
Ăна ыр çул, телей çеç сунчĕç,
Асатрĕç кăмăллăн пăхса.

Çанталăк савăнчĕ. Ташларĕ
Хĕвел Шлипшурăн юххинче.
Лекçей художникăн пуçланчĕ
Çĕн пурнăç Питĕр хулинче!



## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### Тĕп хулара

Тĕнче хăйне кура ик енлĕ:
Пуянлăх, çуклăх юнашар.
Пĕрин кунçул ансат, хĕвеллĕ,
Теприн ӳтне касать йӳç тар.

Епле танлаштарма пултарăн,
Турхан ялне тĕп хулапа?
Çĕрле те, кур, пиншер хунарĕ
Йăлтăртататать хĕм çутăпа.

Çуртсем капмаррăн та мăнаçлăн
Қармашнă янкăр тӳпене.
Урамĕсем тӳп-тӳрĕ, аслă,
Тупаймăн эс вĕçне-хĕрне.

Лекçей шутлать: «Мĕн чул эрешĕ,
Халлап сĕршывĕ ку, ара.
Сакна тĕлленмĕн тĕлĕкре те,
Çапах та эп тĕп хулара.

Сăна-ха, Исаак керменĕ
Епле илемлĕн курăнать.
Хулан кашни урамĕ, енĕ
Сăнарлăн куç умне тухать.

Ун чанĕ пилĕк пин пăт теççĕ,
Епле тӳсеççĕ каштисем?
Хĕресĕсем йăл-ял çиçеççĕ,
Эрешлĕ мăн алăкĕсем.

Соборĕ, чăн та, пит илемлĕ,
Çавра тăррийĕ — ылтăнран.
Чан сассисем тем тĕрлĕ çемĕ
Пулса кĕрлеççĕ: ян та ян!

Барклай де Толлипе Кутузов
Тăраççĕ шухăша кайса:
«Россия çĕнтĕр француза,
Ăна кӳресчĕ вăй та усă».

Шала кĕрсессĕн, савăк юрă
Хăй ытамне ярса илет:
«Пулсассăн та шăпу сан хурлă,
Леш тĕнчере юп курăн»,— тет.

Мĕн чухлĕ фреска! Кур, кашниййĕ
Чунра асамлăх çуратать.
Аваллăхра пуç пулнă нимфа
Кĕлтăвана вăй-хал сунать.

Илем... Илем... Ҫапах та мĕншĕн
Соборсенче вăл ытларах?
Архиерейшĕн, пупшăн, тĕншĕн
Укҫа юхать шывпа танах...

Раубен амăшĕ Лекҫейшĕн,
Ун ĕҫĕ ăнтăрччĕ тесе,
Таҫта та ҫырчĕ ҫырусем.
(Тепри ҫунмасть ҫапла ачишĕн.)

Малтанлăха ҫапла шутларĕ:
«Паллаштăр вăл Эрмитажпа.
Кунта ăна никам та чармĕ,
Каласăп хамăн ывăлпа».

Ун ывăлĕ кермен хуралĕн
Ĕҫне йĕркелесе тăрать.
Пулас килсен выставкăра,
Яш ҫыншăн пулмĕ хупă алăк.

Кĕҫ Свенторжецкаян тĕллевĕ
(Раубен амăшĕ вăлах),
Хĕл кунĕнчех ҫу ҫитнĕ евĕр,
Пурнăҫланма пуҫлать вăрах.

Ара, Лекҫей сӳрет хавассăн,
Сăнран та улшăнчĕ йăлтах.
Эрмитажра пулсассăнах
Вăл сывлама пăрахрĕ ассăн.

Ун умĕнче этемлĕх чапĕн
Хальччен курман картинисем.
Яш каччă тĕлĕнет ача пек:
Маттур-ҫке пулнă ăстасем!

Рембрандтăн «Каскăн ывăл» пичĕ,
Е Леонардо да Винчин
Асамлă, ырă «Джоконди» —
Кашни сăнарĕ çывăх питĕ.

Е вырăс музейне кĕрсессĕн,
Çак тĕнчере пурăннине
Вăхăтлăха манатăн эсĕ,
Лекен асамлăх тĕнчине.

Кунта Ивановăн, Брюлловăн
Хумхантаран картинисем.
Хăюллă Репинăн, Крамскойăн
Мĕнле мăнаç палитрисем!

Пĕр йывăç туратне ӳкернĕ
Астаçă шурă пир çине.
Чылайăшне вăл тĕлĕнтернĕ,
Туйтарнă чĕрĕлĕх вăйне*.

Мĕн чухлĕ шӳт, мĕн чухлĕ кулăш
Султан патне çыракансен?
Ав, бурлаксем ыйтаççĕ, пулăш—
Ку — Репинăн шедеврĕсем.

Кашни ĕçре хĕрӳ ăсталăх,
Хăюлăх, тĕрĕслĕх, илем.
Çын чĕрине уçмашкăн алăк,
Пĕлӳ кирек хăçан кирлех.

Лекçей кĕç путрĕ шухăша:
Асамлăхĕ мĕнре ăстаçăн?
Ку паллă: тар тăкать ир-каçăн,
Йăх-яхпала вăл тупăшать.

---

* А. А. Иванов картини пирки сăмах пырать.

Мĕн калăн-ха: ĕçлет лаша та,
Çын чĕрчун мар.
Çÿлте тăрать.
Тен, йăнăшатăп, аташатăп —
Килет-ши пурте талантран?

Килет те пуль, анчах та эпĕ
Ялан пĕччен, ялан пĕччен.
Хам тĕллĕн çеç тертленнĕрен,
Çул-йĕрĕм тĕрĕс-ши?
Пĕлеймĕп.

Вĕренмелли, ах, тур, нумай-çке,
Атлантсене сăнлас куллен.
Çын кĕлетки тухать, мал ен
Чипер ÿкерĕнесшĕн мар-çке.

Тем тĕрлĕ сăрăсен шевли
Астаçăсен пит килĕшÿллĕ.
Çынсен сăнарĕ çивĕч, вирлĕ,
Ăс-хакăлĕ кашнин тулли.

Кашнин палитри хăйне евĕр,
Сукмак ман пултăр урăхла.
Çын йĕрĕпе пырсассăн евĕк,
Малах каяймĕ ĕнтĕ лав.

Калас тени е тарăн шухăш
Пытаранна питре, куçра.
Вăрттăнлăхне пĕлеймĕн туххăм,
Ÿкерчĕк тупсăмĕ — шырав.

Эппин, тÿрех пурне те пĕлнĕн,
Аллусемпе ан сулкалаш.
Малтан ÿкерчĕкпе паллаш,
Унтан эс шухăшла ху тĕллĕн.

Ҫакна шута хурса тĕпчерĕ
Лекҫей музей ҫыннисенчен.
Унта вăл час-часах ҫӳрерĕ.
Ытти — епле вăй хунинчен...

Ҫак кунсенче тем тĕрлĕ шухăш
Йăл илчĕ хăвăртах унра.
Хăш чух хĕрхӳн е питĕ шуххăн
Пин хĕлĕх янăрать чунра.

Кунта ĕҫлекенни каланă:
«Ҫак Эрмитажăн картине
Сан янташу хитре тутарнă,
Пĕлетĕн пуль-ха ун ятне»*.

Кур: Ҫуллахи садра тем тĕрлĕ
Статуя-палăк, йывăҫсем.
Ҫуртсем ҫинче мĕн чухлĕ тĕрĕ,
Талантсăрах пулман вĕсем.

Питех те хаклă ҫак илемлĕх,
Мĕн-ма тесессĕн, тĕп хула
Ҫын тарĕпе ҫӳле ҫĕкленнĕ,
Пĕвеннĕ ҫĕрĕ юнпала.

Ансат пăхсан — ку Петĕр чапĕ,
Шухăшласан — ĕҫчен нуши.
Тире сĕвет пуян пушши,
Хăҫан-ха унăн вăйĕ чакĕ?

Кĕҫ Свенторжецкая систерчĕ:
Маковский патĕнче пулсан,
Кăранташпа тума ӳкерчĕк,
Пит ыйтрĕ.
Эсĕ тăрăшсам.

---

* П. Е. Егоров пирки сăмах пырать.

Маковский...
Çак ят паллă питĕ,
Ăна Лекçей пĕлет аван.
Вăлах-çке кўнĕ пысăк витĕм,
Унран вĕреннĕ ачаран.

— Юрать...
Сăн-пичĕ, кур, хаваслă,
Ĕçлерĕ тăрăшса ир-каç.
Анчах та чирĕ — çĕр çăтасшĕ,
Асилтерсех тăрать кас-кас...

## Больницăра

Палатăсем, палатăсем,
Тасалăх пур çĕрте те.
Ыйтуллă, ыйхăсăр каçсем:
Усал чир-чĕр, хăçан иртетĕн?

Авал чăваш каланă пек
Чир-чĕр кĕрет пăтпа хураххăн.
Тухать каялла вăл пĕрчĕпе
Эмел çĕнтернĕрен вăраххăн.

Сейсмографсем пек тухтăрсем
Тăраççĕ сыхăра пит тимлĕн.
Хăçан канаççĕ-ши хăйсем?
Ялан палатăра каç-ирĕн.

* * *

Варганова кĕç ун патне
Килсе кĕрет.
Сăн-пичĕ çутă:
— Мĕнле пурнан?

Сывах-и? Тута? —
Ыйту парать çине-çинех.—

Час-час килмешкĕн ерçейместĕп,
Вĕренмелли, пĕлен, чылай.
Сана хыпар кĕç пĕлтеретĕп.
Ќăсăкланан?
Хăвах чухла!

Шÿтлет, кулать:
— Эй, эс, айван та,
Сăпайлăскер те маттурскер.
Ќалаççĕ пурте:
— Эс талантлă!
Эп çеç çакна пĕлместĕп-çке.

Яш йĕкĕт сывăхне ларать те
Пуплет, пуплет, тăнла кăна.
Ќу паллă: хĕр шеллет ăна,
Лекçей пĕччен ан тунсăхлатăр.

— Асил-ха, ак альбомччĕ санăн,
Ќардовский пăхнăччĕ пĕрне.
Ун патĕнче паян пулсассăн,
Мухтарĕ вăл ĕçÿсене.

Турри пĕрле, ăстаçă, терĕ,
Эппин, савăнмалла халь сан.
Хăй тĕллĕн çĕкленмест талант,
Шанатпăр: эс чире çĕнтерĕн.

Тата çакна та эп каласшăн
Леш иккĕмĕш альбом пирки.
Маковский те унпа паллашнă,
Çапла ун шухăшĕн йĕрки:

«Паян тесен паян çул уçă,
Ăс пухтăр академире.
Хăйĕнпеле пуплесчĕ уççăн,
Картинисем паха, хитре».

Çакна мана Ротаст* пĕлтерчĕ:
Эс чирлине çынра илтсен,
Маковский: «Час сывалтăр»,—терĕ.
Шанать вăл эс вĕренессе.

Лекçей тăнлать, итлет сăпайлăн
Варганован калаçăвне.
Хăйне туять пек самайланнăн,
Манса каfive ыратнине.

Анне мана вăрçать хăш чух:
«Çынна çăвар уçма памастăн»,
Хĕр çулĕнче хăй пулнă шух,
Хăюлăха камах хурлатăр?

Алеша, мĕншĕн чĕмсĕр эсĕ?
Ан тун, темскер эс пытаран.
Кӳрентермерĕм-ши, ара?
Чуну ма ыратать, пĕлесчĕ.

— Мĕскер эсир?
Ахаль те парăм
Кунран кунах ӳссе пырать.
Ытла та пысăк-çке чăрмавăм,
Эп чухăн-çке.
Ман çук нухрат.

— Чăнах, чăнах та эс айванçă,
Укçа пирки пуçна ан ват.

* Ң. П. Ротаст — художник, М. Варганова тусĕ.

Унпа тупаймăн эс хăват.
Тус-юлташсем çеç йышлăланччăр.

— Пур çак деревнăри чăвашсен те,—
Пуплет Лекçей хавхаланса,—
Туспа çĕнме пулать теме те,
Санпа вăл юнашар пулсан.

— Ку урăх калаçу,— кулать хĕр,—
Ан сӳрĕклен йывăрлăхра.—
Кăвак куç тавранa сапать хĕм,
Мĕн чухлĕ ăшăлăх унра!

— Кĕнекесем илсе эп килтĕм.
Ăс пух, Алеша, ан ӳркен.
Вĕсем те эмел евĕр сиплĕç.
Сывал!
Тепре тĕл пуличчен!

Йăл-йăл кулса хĕр сывпуллашрĕ,
Васкарĕ Питĕр урамне.
Каретăпа-ши ĕнтĕ кайрĕ
Е утрĕ çуранах килне?

Лекçей выртать.
Çĕр тĕрлĕ шухăш
Кумать пуçра.
Хĕрхӳ вĕсем.
Вĕçне-хĕрне тухаймăн туххăм,
Вăл пĕччен мар.
Ун пур туссем!

Ун пур туссем — пахи те çакă,
Ют хулара пулсассăн та.
Çухалмĕ, йĕп пек, аврта,
Никам хăртаймĕ: «Эй, çӳп-çапă!»

Чăваш тесен те йĕрĕнмĕççĕ
Япшар тумланнă çав çынсем.
Мăнна хумаççĕ,
Вĕрентеççĕ.
Сăпайлă, ăслă-çке хăйсем!

Писаревсем: Людмила, Инна
Е Анна Виноградова,—
Кашниййĕ тивĕçлĕ тава,
Вĕсем те килсе кайрĕç тин çеç.

Тата... Çав Инна пит маттур-çке,
Тин тухнă, терĕç, тĕрмерен.
Сăмахĕ витĕмлĕ те тӳрĕ,
Ăс-хал пуян — вĕреннĕрен.

Хĕртен пĕрремĕш хут вăл илтрĕ:
«Телейлĕ пулĕ ĕççынни.
Кашнин кĕрешмелле халь çиллĕн,
Тĕп пултăр йĕксĕк, мул тени».

«Сăмахĕсем, чăнах та, тĕрĕс,—
Шутлать Лекçей хăй ăшĕнче,—
Пуянсене епле çĕнтерĕн?
Укçи те влаçĕ — вĕсенче...»

Лекçей выртать.
Кĕç кăтăш пулчĕ.
Пуçларĕ тĕлĕк тĕлленме.
Юратнă амăшне ак курчĕ,
Ăна пуçларĕ вăл чĕнме.

Сасартăк улшăнчĕ тавралăх:
Умра — çут кӳлĕ, Пучамас,
Кăтра вăрман, сар хир, çаранлăх...
Чиркӳллĕ ял тухать ума.

Çав кӳлĕ хĕрринчи пĕр йывăç,
Туратсемпе хăлаçланса,
Ларать пурне те хăратса,
Кунта, чăнах, чуна пит йывăр.

Ялти çынсемшĕн çакă вырăн,
Ытла хăрушă — илĕртмест.
Тăп-тăрă шыв та кӳмĕ ырлăх,
Мĕн-ма тесен ку — киремет.

Ăна час-час парне параççĕ:
Шур алшăлли, укçа-нухрат.
Усал ан тытăр — тархаслаççĕ,
Чӳклеççĕ пурте хурлăхра.

Қаç пуласпа хăра-хăра
Ун умĕнчен çынсем ирteççĕ.
Ял киремечĕ пит кăра,
Час ӳкĕте кĕмест вăл теççĕ.

Лекçей курать, ав, юмăç карчăк
Ăрăмласа ăна сиплет.
Анчах та çакă хыт кукаршăн
Укçа çеç хаклă — вăл сисет...

Қăлт-кăлт тĕртет çумри юлташĕ
Сар вырăс — Петĕр ятлăскер:
«Тарланă ху, тата аташрăн,
Ан ĕненсем пуш тĕлĕке».

Ун-кун пăхать Лекçей, чăнах та
Темтепĕр курнă. Қиремет
Пит шиклентерчĕ те, çапах та
Алли кĕске — кунтах çитмест...

Тул çутӑлсан, çӳрет пӗр тухтӑр
Ыйтать хӑй:
— Ну-с, мӗнле ӗçсем?
Ан кулянсам: чире çӗнсе,
Больницӑран кӗçех, ак, тухӑн.

Сывла-ха, ак халь ан сывла-ха,—
Тет тухтӑр, трубкипе итлет.
Унтан калать:
— Памастӑн махха,
Ӳт-пӳ тӗреклӗ — чӗрӗлен.

— Тавах, сире нихçан та манмӑп,—
Тет лӑпкӑ сасӑпа Лекçей,—
Çӗре çити пуçа таятӑп,
Çын сывални вӑл хӑй телей.

— Çапла-с, çапла-с, ку тӗрӗс, шӑллӑм.
Эппин, упра ялан хӑвна.
Чир-чӗр кирек хӑçан та шӑллӑ,
Ан кӳтӗр терт вӑл кунçулна.

Иван Ильич — çапла чӗнеççӗ
Врач-хирурга кунти çынсем.
Ӑна кашниййӗ ӗненеççӗ.
Чунне парать — чир тиенсен.

**Писаревсен çемйинче**

Хисеплӗ, хаклӑ вулаканӑм,
Тен, кичемрех хайлавӑм ман?
Ав критик шӑл хӑйрать: ку санӑн
Поэма-и е çӗн роман?

Чипер сӑнар, хитре ӳкерчӗк
Пӑт-пат кӑна тӗл пулкалать.

Асту, пиҫсе ҫитмен икерчĕ
Сисмесĕрех пыра ларать.

Калаҫҫĕ-ха: ҫапмашкăн авăн
Ушкăнпала чухне шепрех.
Кĕр мăнтăрĕ ҫитсессĕн савăк
Йĕтес туртмашкăн ăш пӳртре.

Поэтăн ҫук пулăшаканĕ,
Ларсассăн шурă хут умне.
Сăмах купи пĕрмай капланĕ,
Пĕл суйлама чи кирлине!

Ку сăмах май кăна-ха, эсĕ
Ҫакна чухлатăн вулакан.
«Лекҫей ăҫта-ха?» — тĕпчесессĕн,
Пĕлтерĕп: «Пурăнать аван».

Яшчен вăтам пĕлӳ илменшĕн
Тертне курать-ха хăй самай.
Вĕрентекен ятне илтмешкĕн
Ĕмĕтленет ҫапах пĕрмай.

Юлташĕ, тусĕ ун йышланчĕҫ
Илемлĕ, шĕкĕр хулара.
Вăл вĕсенчен пирвай вăтанчĕ,
Чăваш ҫыннин ку — йăлара.

Пĕр хушă Раубе ҫемйи
Тăван кил евĕр пулчĕ уншăн.
Кăсăкланан, хĕрӳллĕ чуншăн
Мĕн чухлĕ усăлчĕ ҫĕнни!

Больницăра самайлансан,
Писаревсем тăрăшнăран
Вĕсен именинче вăл канчĕ,
Ҫак ҫемьепе кĕҫ сывăхланчĕ.

Хăйсем пуян, çапах та хапăл.
Чухăннине пăхмасăрах
Унпа кашниййĕ пулчĕ сапăр.
Халь Лекçее хаваслăрах.

Çак кил искусство сыннисемшĕн,
Çĕршер талантшăн тăнă кар.
Хăй ăшшине парса, вĕсемшĕн
Çул уçнă:
«Пул ялан патвар!»

Укçа-нухрат, тумтир-и кирлĕ,
Е эс паян апатланман,
Е Лекçей пек сывмар эс, чирлĕ,—
Сана, ав, хатĕр пулăшма.

Грабарь та килнĕ, шăп ун пек
Кунта пурнать.
Тăвать ӳкерчĕк.
Паллаштарать сюжечĕпе,
Лекçей кĕç ун патне иленчĕ

Е тепĕр чух, ниçта тухмасăр
Хĕрсе кайсах çырать темскер.
Лекçей унран вăлтса ыйтсассăн:
— Пулать,— тет,— пысăк кĕнеке*.

Искусство ăстисен сăнарĕ
Йалт пулĕ эп хайланинче.
Кăшт пушансан, вулать пĕр ярăм:
— Ăнланмалла-и, — тет,— тĕпчев? —

* И. Э. Грабарь вăл вăхăтра 5 томлă «История русского искусства» тĕпчев çырнă.

Ку монографи питĕ кирлĕ
Сан пек мал чунлă çынсене,
Умри тĕтрелĕхе вăл сирĕ,
Художник туптăр хăй çулне.

Е реставратор ĕç-хĕлне
Грабарь сĕнет мала хумашкăн.
Вĕрен, тет, эсĕ вуламашкăн
Ăстаçăн тӳрĕ шухăшне.

— Авал темпера * хуçаланнă,
Сăлтав мĕнре? — ыйтать Лекçей,—
Тем тĕрлĕ сăрăсем пулман-им?
Соборсенче çак хĕм-тĕс çеç.

Унта çеç мар: Эрмитажра та,
Мартинийĕн «Мадоннинче».
Джорджано тупнă «Юдифьра» та,
Пур Тициан «Данайĕнче».

— Маттур, маттур,—мухтать Грабарь,—
Чи чаплă ятсене асилтĕн,
Темперăпа тухать сăнар
Ытти сăрсемсĕрех ăшпиллĕн.

Вĕсен, асра тытсам çакна,
Хăйевĕр пулнă тавракурăм.
Тата кашниншĕн çӳлти турă
Кирек хăçан та — тĕп сăнар.

Мифри сăнар аван-ха, анлă,
Çынсемшĕн ĕлĕкрен вăл паллă.
Унта икьенлĕх çеç иккен,
Нуши вара нумай тĕнчен...

---

* Темпера — ылтăн шывĕпе хатĕрленĕ сăрă.

Ши-ши! Сив ҫил вӗрет. Хӗл ҫитнӗ.
Йӗри-тавра шап-шур пустав
Васансене, уя вӑл витнӗ,
Художниксен умра — шырав.

«Епле-ши пулӗ ӑраскалӑм,
Ҫине-ҫинех чӑрмав, чӑрмав.
Хунав сарӑлсанах хӑрма
Пултарӗ ҫав.
Ҫук! Ҫук! Кил, халӑм!

Килсем. Килсем. Эс пур. Чухлатӑп.
Грабарь та палӑртрӗ ҫакна:
«Ҫул-йӗр ӗҫре кӑна талантӑн,
Ӗҫре кӑна, ӗҫре кӑна.

Ӑна сивлен-тӗк — пулӑн муми,
Пӗлетни эсӗ вӑл мӗнне?
Кам ӗҫлемест, ун чакӗ сумӗ,
Кӗр тӑкнӑ пек сар ҫулҫине.

Кӗр тенӗрен...
Кӗр — шухӑшлавҫӑ,
Сӑна-ха Левитан ӗҫне.
Вӑрманӗ унӑн — хӑй калавҫӑ,
Пӗл ӑнланма ҫут тунсӑхне.

Кӑвак тӗсе вӑл виҫҫӗр майлӑ
Пултарнӑ кӑтартма ним мар.
Ансатлӑх, уҫӑмлӑх, ӑсталӑх
Кашни ӗҫре пулать курма.

Ак вӑл ӑҫта чӑн пултарулӑх!
Ак вӑл ӑҫта талант тени.
Шыравӗ ун епле ав тулӑх!
Хакли умра — вӑл ӳкерни.

Çулсеренех кĕр кунĕ килĕ,
Йăлтăртатса та хĕмленсе.
Чăн-чăн художник ĕçĕ вилмĕ,
Иртсе кайсан та ĕмĕрсем...»

Лекçей çапла хăш чух сисмесĕр
Чăмать те шухăш аварне,
Мĕн курнине, мĕн илтнине
Виçет, танлаштарать чĕнмесĕр.

Çапах та ваттисем калană:
Хăна вăл — виçĕ кунлăха.
Пĕлес пулать-çке чыслăха,
Чухлан пулсан — çухатăн канăç.

Ăна Лекçей манас темерĕ,
Чăваш çыннин ку юнĕнче.
Çак ыр çынсем юп курччĕр терĕ,
Мольберт каймарĕ умĕнчен.

Писаревсен тăван-пĕтенĕ
Е тĕрлĕ репродукцисем
Шур пир çине чипер иленнĕ...
— Аван, Алеша, ĕçÿсем! —

Вера аппан-ха ку сăмахĕ.
Эппин, çын пурăнмасть ахаль.
Çĕкленчĕ Лекçейре вăй-хал.
Çут ĕмĕт илĕртет ахахăн...

Лекçей кĕç уйрăлчĕ пит ăшшăн
Çак тараватлă çемьепе.
Çу çитнĕччĕ. Хĕвелĕ лăпкăн
Пуплетчĕ лĕп, тÿлек çилпе.

Çулсем... Çулсем...
Ăна çитерĕç
Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесне,

Хĕрӳ чуна пĕр çĕклентерĕç,
Пĕр шуйхантарĕç хăш чухне.

Выртан каска мăкланĕ, теççĕ,
Çӳрес-ха çамрăк чух çаплах.
Лексейĕн куçĕсем çиçеççĕ,
Çул-йĕр вăл шухăшсем майлах.

Çул-йĕр вăл ĕмĕт евĕр вĕçсĕр,
Уçсах тăрать кĕнекине.
Хăш чух сăнарĕ унăн тĕссĕр
Е сапалать хăй илемне.

Кулянмалли Лексейĕн çук халь,
Хăпартланса чĕри тапать.
Вăй-халлă тин вăл, пулмĕ суккăр,
Малашлăх ыррăн курăнать.

Сыв пул, чĕремшĕн çывăх Тула,
Çул-йĕр тĕп хуланах чĕнет.
Вера аппа, Грабарь ал сулчĕç:
Çыру çыр терĕç çитсенех.

### Академире

Пур спискра ун хушамачĕ,
Вăл паянтан студент, студент!
Çине тăрса вĕренĕп тет.
Пит илĕртӳллĕ-çке саманчĕ.

Пĕлӳ илме Лексей халь хатĕр,
Ӳркенмĕ, тăрăшĕ куллен.
«Ют йăх чĕппи, ăçта каять-тĕр?»—
Теет пулсан та шăлйĕрен,

Йăвапле хирĕç:
«Эп те çын!
Ыттисенчен кайра тăмастăп.
Чупать ман ўтĕмре шух юн,
Чăваш пулнишĕн вăтанмастăп».

Ма пытарас?
Унччен те илтнĕ
«Василь Йăванчă» тенине.
Варланăран таса чысне,
Кўреннипе ун çилĕ килнĕ.

Чăваш сăпай тытать хăйне,
Ĕçчен те...
Пĕр юмах асра:
Телей валеçнĕ чух пайне
Çухатнă, çăпата сырса.

Çухалнă ĕнтĕ çул çинче.
Ăна выç куçлисем вăрланă,
Қайран пĕр-пĕринпе пайланă,
Вăл, мĕскĕн, юлнă айккинче.

Шăп çавăнпа чăваш телейсĕр,
Ялан çынна пăхать куçран.
Хĕсмечĕ пăвнăран—хевтесĕр,
Йăваш — тўре алхаснăран.

Ун куçĕнче мĕн чул салхулăх
Пытаннă ĕмĕр тăршшĕпе.
Хăçан-ши пурнăç пулĕ тулăх,
Хăçан танлашĕ çынсемпе?..

Лекçейĕн те савăнмалла халь,
Те куççуль витĕр кулмалла?
Шанни, тавах, иртмест ахаллĕн,
Эппин, ăна упрамалла.

«Вĕрентекен ятне илсессĕн,
Ҫаятăпах тăван яла.
Унта эп тăрăшăп ҫынсемшĕн,
Шеллемĕп хамăн вăй-хала.

Йăлт улшăнĕ ман савнă енĕм,
Унта эп уҫăп пысăк шкул.
Сад чĕртĕп—парĕ тупăш-мул,
Юп курĕҫ аттепе аннеҫĕм»...

Эх, ĕмĕт, ĕмĕт... Ун йĕвенĕ
Пит ҫăмăлах лекмест алла,
Хура элчелĕ, хуптĕрленĕн,
Ăса пит пăхăнмасть ялан.

Ҫапах та савăнма сăлтавĕ
Лекҫейĕн пур.
Ҫук сивлеме.
Тиевсĕр мар студентăн лавĕ.
Ҫавах та илчĕҫ вĕренме.

Ҫур, академи! Эп туятăп,
Ҫакна пĕлетĕн, вулакан:
Чăвашсенчен хальччен пĕр ҫын та,
Кунта ура ярса пусман.

Эппин, Лекҫейĕн пур яваплăх,
Ăна вăл ямĕ асĕнчен.
Вĕр-ҫĕн каҫалăк умĕнче
Пĕлӳшĕн тăрĕ-ха хаваллăн.

Тĕп хулара сентябрь ирĕ,
Эрешлĕ тумĕ йывăҫсен.
Яш ҫыннăн ҫутă ĕмĕт ҫирĕп:
«Тухатăпах эп вĕренсе...»

Хĕпĕртекен çынсем те йышлăн:
Ростастпала Писаревсем,
Варганова, Раубесем —
«Пиртен салам сăмахĕ йышăн!»

Маковский ăшшăн çупăрларĕ
Хăй ывăлне юратнă пек.
Куçран пăхса çапла каларĕ:
«Мала çеç талпăн ĕçӳпе!»

Туссем пулăшнипе вырнаçрĕ
Пĕр ватă кинемей патне.
Унта сайра хутра çĕр каçрĕ,
Ĕçре ирттерчĕ вăхăтне.

Маковскийĕн мастерскойне
Çӳрерĕ тăтăшах, вĕренчĕ.
Çăлкуç вăйлатнăн юхăмне,
Хавшак ăс-хакăл çирĕпленчĕ.

Маковский...
Вăратма пултарнă
Çынра тĕлĕрекен ăса.
Унри ыр енсене курса,
Çăнланă кашнине вăл таран.

«Тĕрме çынни», «Тӳрре тухни»,
«Путланнă банк», «Улах çитни»*..
Палитри пурнăçри пек чĕрĕ,
Ӳкерĕннĕ сăнсем тĕп-тĕрĕс.

Çын кĕлеткин хусканăвне,
Шалтан тапса тăран вăйне
Куракансем патне çитернĕ.
Лекçей унран пĕрмай вĕреннĕ.

---

* Маковский картинисем.

Студентăн пурнăçĕ!
Кашниййĕ
Ăна пур кăмăлтан ырлать.
Малашлăха вăл çирĕп никĕс
Вĕреннĕ чух кунта хывать.

Пин-пин этем ун витĕр тухнă.
Тен, эс те, хаклă вулакан,
Ас-хакăл пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă,
Профессорсен умне ларсан.

Пуçламăш пур.
Пулать-тĕр вĕçĕ.
Эппин, лайăххине шанар.
Ан иксĕлтĕр Лекçейĕн ĕçĕ,
Ăна эпир те ыр сунар.

### Лекçей çырăвĕ

Сывах-и, епле-рех пурнатăр
Атте, анне тата Иван?
Ир-кас сире асра тытатăп,
Пурнатăп халлĕхе аван.

Ман ĕçĕм-хĕлĕм чиперех-ха,
Куллен çӳретĕп вĕренме.
Укçи-тенкийĕ хĕсĕкрех-ха,
Студент пĕлет йӳнеçтерме.

Тус-юлташсем пит тăрăшаççĕ,
Çав Раубен тăванĕсем
Тата вĕсен пĕлĕшĕсем
Мана куллен-кун пулăшаççĕ.

Пĕр-пĕринпе пурнатпăр туслăн,
Вăрçас йăла пачах та çук.

Вĕсем мана пăрахман чух
Шанатăп-ха: пуçа эп усмăп.

Вĕренӳре кайра пымастăп,
Йывăртарах та, мĕн тăван?
Мĕн хушнине йăлт пурнăçлатăп,
Вырăссене калап: тавах.

Вĕсем пĕрре те ютшăнмарĕç,
Ыр ĕмĕте сӳнме памарĕç.
Сыватрĕç хăвăрт чир-чĕртен,
Çайран каларĕç: халь вĕрен.

Ма пытарас?
Эп эрленетĕп.
Чун кӳтнĕрен, савăннăран.
Ыр çынсенчен шав тĕлĕнетĕп
Çашни тăван пек пулнăран.

Пуян çынсем те тĕрлĕрен çав.
Çуç-пуçăм уçăлчĕ ман тин:
Пĕри ялан хута кĕрет, ав,
Пач урăхла чĕри теприн.

Çитет пуль.
Эп ыйтса пĕлесшĕн
Сиртен ялти хыпарсене.
Ашчик вăркать тăван кĕтесшĕн,
Çурас килет тăвансене.

Сире ялан аса илетĕп.
Эсир пĕрмай куç умĕнче.
Çыру çырсамăр.
Эп кĕтетĕп.
Хĕрӳ салампала —
Лексçей.

## Йван çырăвĕ

Эпир хавас хыпар-хăнаршăн,
Çырса пĕлтернĕшĕн тавах.
Пит кулянаттăмăр çав саншăн,
Сывалтăм тетĕн.
Ку — аван.

Тавах турра, эпир те сывă,
Çӳретпĕр.
Аптрасах кайман.
Хресчен кунçулĕ, паллă, йывăр,
Ана пирĕнсĕрех чухлан.

Çапла пулин те кĕрмĕшетпĕр,
Çурт лартрăмăр.
Вăл пысăк халь.
Аран-аран йӳнеçтеретпĕр.
Пулать-ши пурăнса кал-кал?

Тетӳ духовнăй семинари
Пĕтерчĕ те ĕçлет ялта.
Хыт кукар мар, пулăшкаларĕ.
Хусах.
Пурнать хăй Тăрăнта.

Курма килсессĕн эп систертĕм:
Лексей пĕччен нуша чăтать.
Ана, эс, пулăшсамччĕ терĕм,
Укçа ыйтма, тен, вăтанать?

Хирĕçлемерĕ.
Йалт ăнланчĕ.
Шантарчĕ тăрăшăп тесе.
Хăй сăмахне вăл тытаканччĕ,
Ан пурăнах кĕлмĕçленсе.

Ялта улшăнусем чылай та,
Хăшне-пĕрне аса илем:
Наçук... Вăл чиркӳре юрлатчĕ.
Çав качча кайрĕ.
Тен, пĕлен?

Чăваш йăли... Вăл авалтан-ха...
Вăрланă терĕç.
Те чăнах?
Йĕрки çĕн мар, пиртен тухман-ха,
Хыпар-сăмахĕ çапларах.

Ялта хĕрсех халь тавлашаççĕ:
Яппун вăрçи хăçан пĕтет?
Тĕп хулара мĕн калаçаççĕ?
Çырса пĕлтер, пĕлес килет.

Нумай арçын вăрçа ăсанчĕ,
Ят çĕр хуçасăрах юлать.
Вăтам хресчен те терт курать.
Кунçул татах та йывăрланчĕ.

Епле пулсан та, шăллăм, чăт эс,
Нуша чакать çутта тухсан.
Ан ӳркенсем, хурав пар тăтăш,
Çыраканни —
тетӳ Иван.

* * *

«Наçук, качча савсах-ши кайрăн?
Апла-капла-и, пурпĕрех
Аçун ирĕкĕнчен тухаймăн,
Хĕр ĕмĕрĕ — кив йĕркере.

Ахальтен мар ăшчик вăркарĕ,
Мĕн тăвăн — пултăм аякра.

Ĕмĕтленеттĕм: пулăн арăм,
Çак шанчăк юлчĕ чунăмра.

Сана саваттăм хытă.
Халь те
Манра сӳнмен-ха çав хĕлхем.
Сана саваттăм вăрттăн, халлăн,
Пиллеттĕн чун-чĕме илем.

Тавах пуриншĕн те, чиперĕм,
Пĕлмен эс эп юратнине.
Сана курсассăн шикленеттĕм,
Ан систĕр теттĕм савнине.

Мĕн тăвăн, чирлĕскер, хăйман-тăр
Куçран пăхма, утма пĕрле.
Каçар, савниçĕм, хурлантартăн,
Сĕнеп çакна çеç: туп телей».

Лекçей пĕччен хаш-хаш сывларĕ,
Асилчĕ хăйĕн кунçулне.
Юратнă хĕрĕн ыр сăнарĕ
Пит ыраттарчĕ чĕрине...

## 1905 çул

Хула шавлать, хула кĕрлет,
Ир пуçласа каçчен сĕрлет:
Кĕлтунине патшамăр илтĕ,
Пире те çитĕ унăн пилĕ.

Историшĕн çак кун халь паллă:
Кăрлач.
Гапон чĕнни.
Сив кун.

Шап-шур юра хӗретнӗ юн,
Урамсенче ялавлӑ халӑх.

Урамсенче ялавлӑ халӑх:
«Текех шанмастпӑр патшана —
Сунатпӑр вилӗм ҫеҫ ӑна.
Тӗп пултӑр ҫӗр ҫинче чуралӑх!

Унччен айван, сӗм-суккӑр пулнӑ,
Тӳре-шара алхаснӑ, пуйнӑ.
Епле-ха тӗшмӗртмен ҫакна? —
Пуян ӑнланмӗ чухӑна!»

Урамсенче ялавлӑ халӑх,
Пӑшал сасси, ҫын йынӑшни,
Нухайккӑ сиввӗн шӑхӑрни,
Ҫӳле ҫӗкленнӗ шӑнӑр алӑ.

Чӗнӳ нихҫанхинчен те уҫӑ,
Янрать, ав, хыттӑн:
«Қам — кама?
Юрамӗ айккинче тӑма,
Қӗрешӳре пул пултаруҫӑ!»

Қӑра ҫил-тӑвӑл урӑм-сурӑм,
Утма чарать, ҫула пӳлет.
Ҫапах ӗҫхалӑхӗн ӳсет,
Ӳсет куллен-кун тавракурӑм.

Ӗмӗрлӗхе кӗрсе вырнаҫрӗҫ
Лексей чунне хӑруш сӑнсем:
Пӑшал сасси янранӑҫем
Қуҫ умӗнчех ҫынсем йӑванчӗҫ.

Аманнисем ытла та йышлӑ,
Мӗнре-ха айӑпӗ вӗсен?

Патша хушнипеле персен,
Хăй тĕллĕнех пĕтет-им выçлăх?

...Кăшт маларах Лекçей çӳретчĕ
Вăрманçă Циммерман * патне.
Унти пухусенче питлетчĕç
Пăнтăхакан влаç тытăмне.

Шпик-тăшманран сых тăнă тимлĕн,
Вĕсем çӳренĕ шăршласах.
Çынна йĕрлеççĕ каçăн-ирĕн,
Серепине лекме ансат.

Урамсене тасатакан та,
Пострти жандарм, çуртри швейцар,
Çурт пăхакан, лав тытакан та—
Кашни сыхлать, сăлтав çеç пар.

Лекçей кăсăкланса вуларĕ
Юлташĕсен программине.
«Мĕн чухлĕ тĕрĕслĕх,— шутларĕ,—
Эппин, ăс-хал терте çĕнет.

Ман вĕсемпе çеç çулăм-йĕрĕм,
Вĕсен тĕллевĕ — ман тĕллев,
Пуласчĕ туссемпе пĕрле,
Мĕн ма тесен, утаççĕ тĕрĕс.

Зиварт **, Матэ***, хăюллă Репин,
Кашни вут-хĕм сапать чуна.
Вĕсем пекех кĕрешĕп эпĕ,
Юрамĕ лăпланма мана».

---

* А. Н. Циммерман — паллă вăрманçă-ученăй.

** Э. Ф. Зиварт — Петербургри пичет ĕçĕн офорт мастерскойĕнче заведующи пулса ĕçленĕ.

*** В. В. Матэ — Петербургри Художество академийĕнче профессор пулса ĕçленĕ.

Карл Маркс сăнне ӳкерчĕç хăварт,
Тĕпе хурса офорт мелне.
Ку ĕçшĕнех, туятăр хăвăр,
Лекме пулать-çке тĕрмене...

Çав кун Лекçей кĕрешрĕ паттăр
Салтаксемпе, казаксемпе.
Пĕр ушкăнри тусĕсемпе
Васкавлăн турĕç баррикада.

Вуншар çынна çăлас тесе,
Ĕçлерĕ санитар пулса та,
Казак утпа таптаттарсан та,
Тăмарĕ вăл пит шикленсе.

Сисмен те, илтрĕ саламатăн
Çĕлен пек чашкăран сасне.
Палли те юлчĕ асăнмалăх,
Суранлатса яш çын ӳтне.

Казакăн силлĕ сăнĕ-пичĕ
Мĕлтлетрĕ куçĕ умĕнче.
Пуçра кĕç çиçрĕ шухăш-çиçĕм:
Хăпасчĕ вилĕм ункинчен.

Каярахпа хăй мĕн-мĕн курнă,
Çавсем йăлт куçрĕç хут çине:
Дворцовăй площадь. Юнлă кунăн
Саманчĕ лекрĕ эскизне.



# ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ

## Яла таврӑнни

Салам! Салам! Юратнӑ ялӑм,
Укӑлчара кӗтсе илен.
Сана савса мӗскер эп калӑп?
Сисӗтӗп: маншӑн шикленен.

Урамусем ҫеремлӗ, тӳрӗ,
Ӑҫта ан пӑх: йӑмра, тирек.
Ҫунта хавхаланса эп ҫӳрӗп,
Сӑнланӑн ман ӳкерчӗкре.

Ялта ҫич ҫул хушши пулманччӗ,
Пӗрмай тухаттӑн куҫ умне.
Шутлаттӑм аякра чухне:
Часрах сан ытамна чӑмасчӗ.

Кунта кун курнă çын хаваллăн
Тăван çĕртех тымар ярать.
Эп çеç, тĕнче касма çуралнăн,
Телейĕме шырап ютра.

Паллакансем чарсах тĕпчеççĕ:
— Эсех-и ку вара, Лекçей?
— Курма-и е каян кĕçех?
— Чĕлхемĕре манман-и? — теççĕ.

Е пĕр-пĕр тĕлпулан васкавлăн
Хывать те хăвăрт карттусне,
Ăна чиксе хул хушшине,
Тăрать пуçне пĕксе йăвашшăн.

«Мана улпут тесех шутлаççĕ,—
Лекçей хĕрхӳн кулса илет,—
Вĕсем чухлаççĕ-ши, хальхаççăн
Мул тĕнчине чун-чĕм сивлет.

Йăваш та мĕскĕн çав ман халăх.
Сăлтав мĕнре тесе ыйтсан,
Чылайăшĕшĕн ĕнтĕ паллă:
Терт-хĕн, чуралăх пулнăран.

Вăл миçе ĕмĕр асапланнă
Сив пусмăр, нишлĕх айĕнче?
Батыйĕ е тутарăн ханĕ
Ăна хĕстернĕ чылайччен.

Паян кунччен те унăн пурнăç,
Ĕлĕкхи пек, пач улшăнман.
Çакна эп хам астивнĕ, курнă,
Эппин, вăл çĕнелет хăçан?

Çул-йěр пěрре: ěççыннисем
Влаçа илсен, çут ěмěт тулě.
Ун чух хěвел те ăшшăн кулě,
Телейлě пулěç чăвашсем».

Çак шухăшпа Лекçей хавассăн
Çитсе тăрать хăйсен тěлне.
Умри вěр-çěнě çурт Иванăн
Асилтерет пěр çырăвне.

Вăл ӳснě пӳрчě те кунтах-ха,
Пăсман. Унта мунча. Пур лаç.
Капланчěç шухăшсем вăраххăн,
Шуйхантараççě кăмăла.

Начар, кивелнě вăл тесен те,
Ун хӳттинчех пулас килет.
Тахçан кунта мěн чул тертленнě,
Ěлěкхиллех чěнет: килех!

— Мěнле çитме пултартăн?—амăш
Куççулě витěр сăмахлать.—
Пире манман эс, ăшçунтармăш,
Ютра епле пурăнкалан?

Аннем, ан пăшăрхан-ха маншăн,
Пурнатăп эп сěре аван.
Тахçантанпах килсе курманшăн
Ан вăрç-ха/эпě сып-сывах.

Сухăр шăршиллě çěн пӳртре
Лекçейшěн пурте, пурте ырă.
Пăхать ăна, ав, кěтесрен
Ача чух хăй сăрланă турăш.

Чăнах та, çурчě аслă, ирěк,
Тултан — хитре, шалта — таса.

— Иван ĕçлерĕ каçăн-ирĕн,—
Тет амăшĕ,— чунне парса.

Çак селĕм çуртшăн ĕмĕтленнĕ
Аçупала пĕрлешсенех.
Ăна туса лартма сĕмленнĕ,
Çак пурнăçланчĕ, кур, тинех...

Йăли çапла-çке чăвашсен:
Каçпа пĕрле пуçтарăнсассăн,
Лараççĕ пурте шăппăн, сассăр,
Итлеççĕ çĕнĕ хыпарсем.

Лекçей пĕр такăнмасăр, уççăн
Калавăн çăмхине сӳтет.
Курман çĕрсем-шывсем вăл уçнăн,
Итлекене тĕлĕнтерет:

— Ах тур-тур-тур, епле-ха хăйнă
Патша хушу пама, пеме?
— Суян пуль — йывăр ĕненме.
— Эппин, эх, шанчăк пирĕн «шăннă?»

— Суятăп-и? — Лекçейваскавлăн
Уçса кăтартрĕ çурăмне,
Куçĕсенче çиçет хаярлăх,
— Куратри саламат йĕрне?

— Суймастăн-ха, эпир пĕлесшĕн:
Çынсен епле пурăнмалла?
Пăлхав тени вара кирлех-ши,
Тен, патшанах пăхăнмалла?

Херсе кайсах Лекçей калаçрĕ,
Вуларĕ прокламацисем:
— Кĕрешмелле пурин те влаçшăн,
Пирĕнпеле — ĕççыннисем

## Çĕнĕ хушамат

Ял лăпкăн вăранать.
Иркӳлĕм
Сас-чĕв таçта çити каять.
Хресчен çӳрен утне, ав, кӳлнĕ,
Хура вăрман енневаскать.

Кĕç урампа кĕтӳ ăсанчĕ
Пуç çийĕн пĕлĕт çĕклесе.
Çил вĕрнĕçем вăл час саланчĕ.
Хĕвелĕ тухрĕ хĕрелсе.

Çу кунĕ
Ун кашни саманчĕ
Илемĕпе пит илĕртет.
Хресчен:
«Çынран пит юлас марччĕ»,—
Тесе ĕçе, ав, кӳлĕнет.

Хĕл хырăмĕ, чăнах та, сăхă,
Мĕн пуррине çăтса ярать.
Паян — çăтмах пек ырă вăхăт,
Вăл тăрĕ урăхла ыран.

Апачĕ пултăр ытлă-çитлĕ,
Çак шухăш яланах пуçра.
Е пуп тавраш калать:
«Сан çитĕ
Çут ĕмĕтӳ савсан турра.

Вăл çилленсен, çухатăн канăç,
Тĕлпулăн яланах типшар.
Асилӳре çеç юлĕ савнăç,
Çат çыпăççан çума нуша».

* * *

— Ҫама куратăп эп.
Алеша!
Ҫилти пек пул,
Ирт тĕпеле,—
Раубе йĕкĕте пит ăшшăн
Йăл-йăл кулса кĕтсе илет.—

Аван пурнатни, ăмăрткайăк,
Ĕҫӳ-хĕлӳ сан еплерех?
Пĕлетĕп: академире
Ăс-хал пухан.
Ку питĕ лайăх!

— Эп халь студент—вăл сирĕн тивĕҫ,
Енчен те пулăшман пулсан,
Кунҫул ҫапла шумасчĕ тикĕс,
Сире эп тав тăвап чунтан.

Ҫилте чылайранпа пулманччĕ,
Ĕҫĕмсемпе — ялйышăма
Шут тытрăм-ха паллаштарма,
Эсир пырсан, чăнах, аванччĕ.

— Манманшăн, ыр чĕнӳ-хыпаршăн,
Хисепленишĕн, шăллăм, тав.
Паллах, пыратăп, эпĕ саншăн,
Алеша, хĕпĕртеп чунтан...

Ҫама курать, ҫавна хавассăн
Лекҫей выставкăна чĕнет:
— Янташăмсем ман ĕҫсене
Тиркемĕҫ-ши?—сывлать хăй ассăн.

Килен-каян кашни мухтарĕ:
— Чăваш ятне çĕртмест!
Ăста!
Çынсем тĕлĕнерех вуларĕç
Ӳкерчĕкри хушамата:

— А. Кокель тенине вара
Епле ăнланмалла-ха, пĕлĕш?
Лексей кулать:
— Эсир, ара,
Пире çапла ят панă ĕлĕк.

Чăваш сăмахĕ вăл, янравĕ
Нимĕçлерех те — мĕн тăван?
Ана ăнланĕ теп тăван,—
Çапла çеç пулчĕ ун хуравĕ.

**Асамлă пултарулăх**

Мĕнрен килет-ши пултарун
Хĕрӳ саманчĕпе тĕллевĕ?
Мĕнре-ши вăрттăнлăхĕ ун?
Ăçта художникăн телейĕ?

Çапла та пулкалать: хăш чух
Суялăх юхăмне лекетĕн,
Шыратăн пурпĕр урăх çул,
Ман ĕмĕт пурнăçланĕ тетĕн.

Шапа нихçан пулаймĕ шăпчăк,
Çĕлен вĕçеймĕ тӳпере.
Хăй евĕр сасă парĕ шăрчăк,
Çавах тăри юрри шепрех.

Чăвашăн çапларах сăмах:
Йышпа пĕр чашăкран çисессĕн,

Асмассерен лекмест çăмах,
Çак чăнлăха пăсаймăн эсĕ.

Çапах та эп сăнанă лайăх,
Хисеплĕ, хаклă вулакан,
Тăван енре тем тĕрлĕ кайăк
Юрлать пек пĕтĕм кăмăлтан...

Çӳретĕн-и тĕп хулара,
Туму яка, сăну сан çутă.
Анчах та тем çитмест чунра,
Хăть мĕн кала: кунта эс ют çын.

Килсеччĕ, тен, вăхăтлăха,
Юлмастăп, тен, яланлăха.
Мехел çитсен, каятăп тетĕн,
Çакна эс хытă ĕненетĕн.

Çапах та вăхăт иртнĕçем
Хăвна ху суйнине туятăн.
Шавлан хула тыткăнĕнчен
Ах, йывăр-çке хăпса тухмашкăн.

Чăрмавсăр, тертсĕр сăнланать
Ялта этюд та çĕн ӳкерчĕк.
Куç умĕнчех теми, сюжечĕ,
Ан юлхавлан: ĕçле кăна!

Мĕнре сăлтав?
Явапĕ паллă:
Тăван çĕр хăй хавхалатать,
Чуна вĕçме çунат парать,
Вăлах сана пиллет хаваллăх...

Ĕç-хĕлĕ тикĕс пынăран
Лекçей нихçанхинчен телейлĕ.

«Чăваш кĕвви» картинăра
Тăван сăнсем вырнаçрĕç меллĕн.

Ӳкерчĕкри сар хĕр сăн-пичĕ
Çурхи кун пек йăл-йăл çиçет.
Ун кĕлетки, кур, йăрăс, пиçĕ,
Шур хурăна асилтерет.

Çак сăн ют мар-ха турхансемшĕн,
Паллаççĕ пурте: ку — Наçук.
Хĕр çулĕнче çӳренĕ чух
Вăл вутăш пулнă каччăсемшĕн...

«Чăваш хĕрарăмĕ» сăнар
Ӳкерĕнчĕ, пулмарĕ кăйттă.
Лекçей, кур, тĕлĕнет халь хăй те:
«Хамах сăнларăм-и çакна?»

Ĕçлет-ха Ҫокель, йăлтăр кулă
Ун сăн-питне кĕç илĕнет.
Çапла. Асамлă пултарулăх,
Вăй-хал хурсан телей кӳрет.

## Кӳлĕ хĕрринче

Тӳлек çу каçĕ.
Ҫĕвентеллĕ
Сар хĕр тăкать кӳлле шывне.
Çӳлтен пăхма ăна пит меллĕ,
Тен, вăл кĕтет чун савнине?

Тин тулнă уйăх çутинче
Юмах тĕнчи те пурнăç хутăш.
«Ҫилет-и е килмест-и?»—шухăш
Лекçейĕн ырнă чĕринче.

Кӗҫ ял енчен ҫывхарчӗ хӑвӑрт
Вӑл кӗтнӗ ҫын.
Хай шур тумпа.
Ах, шух чӗри, ӑна та тӑвӑр,
Сиксе тухас пекех тапать.

— Наҫук!
— Лекҫей!
Кӗҫ ыталанчӗҫ.
Анчах, темрен хӑранӑ пек,
Хӗрарӑмӗ аванмарланчӗ,
Чӗтрерӗ йӑрӑс пӗвӗпе:

— Лекҫей, шӑпа ман, пӗл, телейсӗр.
Сана ҫеҫ савнӑччӗ чунтан.
Кив йӑларан пӗрре иртмесӗр
Кунҫул шӑвать ҫав. Мӗн тӑван?

Мана вӑрларӗҫ, турӗҫ арӑм
Хӗве хупса хурса, вӑйпах.
Шӑпам ҫинчен нумай шутларӑм,
Ӗмӗтӗмпе ҫавах санпа.

Кунҫулӑмра пӗрле утасчӗ,
Хӗр чух шутлаттӑм ӑшӑмра.
Анчах та чечеке татсассӑн,
Шанать вӑл хӑвӑрт ют алра...

— Наҫукӑм, хаклӑ ҫыннӑм, чунӑм,
Сана савап ӗлӗкхиллех.
Пӗрре те сӗврӗлмен ман туйӑм,
Ан хирӗҫле — пулар пӗрле.

Ыран каятӑп.
Эпӗ хатӗр
Пӗрле тармашкӑн хулана...

— Çук! Çук!
Эп çылăхран хăратăп.
Улталаймап упăшкана.

Чунтан-вартан юратмасан та,
Унпа-çке пулнă венчетре.
Тур çырнинчен иртмен никам та,
Ялтах иртterĕп ĕмĕре...

Сыв пул, сыв пул.
Телейлĕ пул.
Сана пиллетĕп такăр çул,—
Наçук ачашшăн сăмахларĕ,
Унтан ял еннеллеваскарĕ.

Лексейĕн чунĕ пит пăлханчĕ
Наçук кайсан,
Пĕччен юлсан.
Сар уйăх хурланса пытанчĕ
Ик чун телей тупайманран...

**Репин патĕнче**

Кирек хăçан та çак кĕтес
Килен-каяншăн питĕ хапăл.
Хĕлле, çулла — тавралăх капăр,
Ялан телей сунса кĕтет.

Аллейăпа утса пыруçăн
Тăнлатăн хурăнсен шавне.
Сипетлĕ, ырă, сывлăш уçă,
Çĕклентерет çын кăмăлне.

Çултан кăшт пăрăнсан, тухатăн
Тăп-тăрă кӳлĕ хĕррине.

Ун пуçĕнче кĕç асăрхатăн
Пĕр пысăк çурт кӳлепине.

Вăл хăй сăнне йăлтах ӳкернĕ
Чĕркĕмĕл евĕр шыв çине.
Çурт çумĕнче хырсем çĕкленнĕ
Вĕçес пек янкăр тӳпене.

Çак вырăна «Пенаты» теççĕ
Мал ĕмĕтлĕ хастар çынсем.
Эрнесерен, юнкун çитсен,
Пĕрне-пĕри курма килеççĕ.

Хуçи, художник, аслă Репин,
Хавас та хапăл хăнана.
Кунтах Маковскипе Шаляпин,
Тĕл пулăн харсăр Куприна.

Лараççĕ Бехтеревпа Павлов
Çавра сĕтелĕн хушшинче.
Шӳт-кулă янрасан пĕр авăк,
Сăмах пуçлаççĕ Руç çинчен.

Асапĕ, ун пулас шăпи те,
Кашнийĕшне хумхантарать.
Вĕсем ăна саваççĕ питĕ,
Пусмăрлăха кашни вăрçать.

Гостинăйпа юнашарах
Килекенсемшĕн пур пĕр пӳлĕм.
Унтан кĕç гонг сасси янрать:
Эс кая ан юл тенĕн ӳлĕм.

Мĕн ма тесен, айăплансан,
«Штраф сăмахне» каламалла-çке,
Трибуна умĕнче тăрса,
Кăçарăвне те ыйтмалла-çке.

Тата пӗр ыр йăла кунта:
Çак çуртшăн ют лакей таврашӗ.
Хăвна ху пăх.
Ан пул куштан,
Мӗн пуррипе çырлах, тархасшăн.

Çын тарӗпе пурăнманран
Пурин те чунӗ хир пек аслă,
Мăнна хурас йăла çукран
Пӗр-пӗринпе кашни юлташлă.

Çакна та палăртас килет:
Енчен чуну сан пушă, хăвăл,
Кунта ларма ан ӗмӗтлен,
Хуçи сисет пурне те хăвăрт.

Ас-хал тиркевлӗ ун, пит çирӗп.
Хăй шухăшне калать кусран.
Хăш чух ачаш, хăш чух пит вирлӗ,
Эппин, картран ан тух нихçан...

— Туссем, туссем, паллаштарасшăн
Сире эп çамрăк çынпала.
Чăваш вăл,—Репин, калăн, ашшӗ
Яш Кокеле кӗç çупăрлать.—

Мана паян вăл тӗлӗнтерчӗ
Тин çеç вӗçленӗ ӗçӗпе.
«Чăваш хӗрарăмӗ» ӳкерчӗк
Пит кăсăклă шухăшӗпе.

Унра пур самана кӗрлевӗ,
Экзотика хăйне кура.
Туятăп: Кокелӗн тӗллевӗ
Яр уçă — хаклăр хăвăрах.

— Эп çамрăк çын ячĕпеле
Туссем, юрласшăн çĕнĕ юрă,—
Шаляпинăн сасси пит ырă,
«Эй, ухнем!» кĕвĕ ак кĕрлет.

Лекçей шалт тĕлĕнет: епле-ха,
Руç çĕрĕн чаплă çыннисем
Ăна таван пек хисеплеççĕ?
Кăмăлĕпе юмарт хăйсем.

Чăнах иккен: камра ăс-хакăл
Тапать ейӳ пекех куллен,
Çавсем ахаль çынна шав хапăл,
Мĕн ма тесен — хăйсем ĕçчен.

Вĕсем санпа пĕрле пайлаççĕ
Хуйха-суйха та ырлăха.
Кирлех пулсассăн — пулăшаççĕ,
Çӳлте тытаççĕ чунлăха.

— Туссем, çĕн шухăш çапларах:
Эсир, сисетĕп, хирĕçлемĕр:
Алеша ман мастерскойра
Хăй хирĕç мар пулсан—ĕçлетĕр.

Мухтанипе вăл каппайланмĕ —
Унра пур ăнтăлу, хĕлхем.
Ширанă чух кĕтрет-илем
Ĕмĕтĕнчен, пĕлетĕп, чакмĕ.

Кил пуçĕ—Репин—кур, ăшпиллĕн
Лекçей çине пăхать, кулать.
Татах пуплет,—
Сăмахăм-пилĕм
Ун чунĕнче йăва тупать.

Лексей нихçанхинчен телейлĕ
Çак ушкăнра, çак пÿлĕмре.
Еçлесчĕ, тет, татах тĕллевлĕн,
Пуплет: — Тавах, тавах сире...

### «Эс Гоголь пек йĕплетĕн...»

— Пĕлетри, Кокель, сирĕн сăмсăр
Камăнни пек?
— Ăçтан чухлас?
— Вăт апăрша.
Тĕпчевлĕн сăнăр.
Çыравçă Гоголĕн. Çапла-с,—

Те шÿтлесе, те чăнласа
Кардовский Лексейпе пуплерĕ.
«Ĕçе тиркерĕ-ши кулса?»
Пĕлес килни ыйтма хистерĕ.

Умра эскиз.
Ача чухне
Тиххăнпала сăнанă тĕкĕр.
Курма пулать хресченсене.
Уретник пур.
Пырса ан тĕкĕн.

Кардовский кĕттермест вăрах:
— Сан Гоголь пек йĕплемелле-тĕр,
Ун çулĕпех каян пуль тетĕп,
Эскиз аван та-ха. Анчах...

Танлаштарушăн ан кÿрен,
Халь саманийĕ хивререх.
Диплом ÿкерчĕкĕ... Вăл уссăр
Ан пултăрччĕ, ман çамрăк тусăм.

Сăмсу,— кулать хăй чунтанах,—
Çав аслă Гоголĕн майлах.
Лексей Кардовские ăнланчĕ,
Унпа пĕрле вăл хаваланчĕ.

Чуна уçма пулать иккен
Ахаль сăмахсемпех, шăв-шавсăр,
Ватти ансаттăн систерсен,
Яш çын ăнланĕ пĕр сăмахсăр...

Лексей виç çул каяллине
Асилчĕ ĕç вĕçленнĕçемĕн.
Ун чух хĕрсех шыратчĕ тема,
Кĕç «Чайнăй» тухĕ çын умне.

Кăсăкланса тăрать-ха Репин:
— Ĕлкĕрĕн-ши?.. Пит килĕшет...
Куракансем ăнланĕç теп те,
Анчах...
Пурне те кам пĕлет...

Çапла чунне парса вăй хучĕ,
Татмаççĕ-ши ун ĕмĕтне?
Епле-ши пулĕ конкурс «сучĕ»,
Тăратнă çĕр çын хăй ĕçне.

Кардовский çапларах шутлать:
— Ӳкерчĕкӳ çĕнтерĕ тетĕп.
Вăл пĕр енчен пăхма ансат,
Тата...
Эс Гоголь пек йĕплетĕн...

Чăнах та, ун картинине
«Чи лайăххи» тесе хакларĕç,
Пур енлĕн тĕпчесен, шутларĕç:
Парас лауреат ятне.

Ҫăрлачăн тĕксĕм кунĕсем
Лекçей чунне хăратаймарĕç.
Пĕр хаçатра, юлташ, сиссем:
Ăна журналистсем ырларĕç*.

Çыракансем нумаййăн пулчĕç,
Анчах статйи ку — чи хакли.
Тинех ĕмĕтленни ун тулчĕ,
Пулмарĕ вăл йăх-ях кулли.

Ан тив, хаяр, сив шартлама
Тавралăхра халь хуçалантăр.
Чăваш ачин, эсир чухлатăр,
Сăлтавĕ пур-çке мухтанма!

Вăл çĕнтерӳçĕ паянтан,
Нумай çул тар ахаль тăкман.
Турхан хресченĕн, Ахваниçĕн
Лекçейĕ курмĕ ĕнтĕ нишлĕх.

Чи лайăх паллăпа вĕçлерĕ
Часах вăл академие.
Зенковпала ** эс тивĕç терĕç,
Ҫайса курма Италие.

## Европăра

Хисеплĕ, хаклă вулаканăм,
Тен, килĕшетĕн эс манпа.
Геройăм, ак, çула тухсан та,
Пулатпăр эпĕр те унпа.

---

* Кунта сăмах 1913 çулхи январĕн (кăрлачăн) 5-мĕшĕнче «Правда» хаçатра А. А. Ҫокелĕн «Чайнăйра» ӳкерчĕкĕ пирки пичетленнĕ рецензи-статья пирки пырать.

** Зенков С. Н. — художник.

Шӳтлеççӗ-ха: çул-йӗр çитерӗ
Ӳркенмесессӗн Рим таран.
Тӳрех калам: ик çул çӳрерӗ
Вăл пăлханса Европăра.

Берлинпа Дрездена çитсен,
Музейсенче пулма тӳр килчӗ.
Хăй ытамне кӗç Вена илчӗ,
Парижăн Луврӗ те ӗлккен.

Кӗтет юмах тӗнчи — Итали,
Умра Милан — хăй чун варли.
Флоренцие О, Велла* теççӗ,
Унта пулма ӗмӗтленеççӗ.

Зенковӗ — тусӗ — çул юлташӗ:
— Çитетпӗр,— тет,— Рима часах.
Вара ӗçлетпӗр савăнсах,
Вӗсем халь иккӗн пӗр канашлă.

Вулакана çакна каласшăн.
Çитсессӗн Кокель Парижа,
Унпа пуплерӗ Луначарский
Чунтан, хăйне хумасăр шак.

Вăрманçă Циммерман ыйтсаччӗ:
— Ăна парсам çак çырăва.
Вуларӗ те пит хавасланчӗ:
«Ку питӗ кирлӗскер, тавах».

Вӗр-çӗн ӗçӗсене курсан,
Шуйханчӗ харсăр Луначарский:
— Мана ӳкернӗччӗ-çке эсӗ!
Калаçрӗ Кокельпе чунтан.—

* Велла — çав тери хӳхӗм.

Чăнах та, пирĕн академи
Маттурсене çул-йĕр парать.
Европа тĕлĕнет унран,
Çапла çав.
Пысăк ун çĕклемĕ!

Италие çитсессĕн эсĕр
Тĕл пулăр Золотаревпа *.
Ман çырăва илсе çитерĕр,
Туслашăр иксĕр те унпа.

Қапри утравĕнче паллашăр
Хальхи чи чаплă çынпала.
Ятне-шывне аван чухлатăр...
— Тен, Горькие?
— Çапла, çапла...

Çакна аса илсе пыруçăн
Вĕсем çитеççĕ кĕç Рима.
Мĕн курнине ик пултаруçă
Васкаççĕ ӳкерсе пыма.

Пĕр кунĕ мар ун чух, сехечĕ
Художниксен сая кайман.
Çапла — хавхалану тивлечĕ!
Çитмен кĕтес те хăварман:

Геркуланум, Помпей, Неаполь,
Соррентопа Пестум**, çапах,
Чи хаклă тĕлпулу — шăпа çав —
Пуплерĕ вăл «Джокондăпа».

---

* Алексей Александрович Золотарев — писатель. Çав вăхăтра вăл Қапри утравĕ çинче вырăссен колонине ертсе пынă.

** Италири хуласен ячĕсем.

Римра, Боргезере * упратчӗҫ
Ӑна, илемлӗх туррине.
Ҫынсем пырсах, пырсах тӑратчӗҫ,
Сӑнатчӗҫ ун тӳлек сӑнне.

«Джокондӑна» ӳкернӗҫем
Асилчӗ Кокель, ак, кӗҫех:
Малтан Петербургра курсаччӗ,
Эрмитажа ун чух кайсаччӗ.

Вунвиҫӗ ҫул...
Ҫак хушӑра
Ӑна «Джоконда», тен, вӑй панӑ?
«Ӗмӗтленни йӑлт пулӗ санӑн»,—
Тесе пӑхать халь ҫывӑхран.

## Горький сӗнӗвӗ

Итали!
Чӑн илем ҫӗршывӗ.
Историйӗ епле пуян.
Аваллӑхӗ паян та сывӑ,
Пин кӗвӗ янӑранӑран.

Юмах пек пулнӑ, тет, Равенна
Чуралӑх хуҫаланнӑ чух.
Уяв та пурӑнӑҫ кӗрленӗ.
Шӑв-шав тени кунта халь ҫук.

Чиркӗвӗсем епле мӑнаҫлӑ,
Мозаика кӳрет илем.
Чӑнах та, ӗҫ тени вӑл аслӑ,
Этем унра шырать телей.

* Боргезе — Рим хулинчи паллӑ кермен.

Итали!
Соборсен кӗтесӗ
Мӗн чул художник ҫуратман!
Беатона* сӑваплӑ теҫҫӗ,
Картинисем пит чаплӑран.

Асамлӑ ҫав чӑн пултарулӑх.
Искусство пулнипе кӑна
Туррийӗсем пурнаҫҫӗ. Юлӗҫ
Вӗсем татах ҫӗн эрӑна.

Ӑҫта кӑна ҫитмерӗ Кокель
Этюдникне илсе пӗрле!
Везувие чылай ӳкерчӗ,
Кашни сӑнар чуна ҫӗклет.

Горькипеле ик хут тӗл пулчӗ.
Писатель сыншӑн таврват.
Канашӗсем асрах ун юлчӗҫ:
«Ӗҫлекене чыслас пулать.

Искусствӑра халь — ҫӗнӗ юхӑм,
Тӗлпулинех шӑлйӗрекен,
Каярахпа ӑнланӗ туххӑм,
Ҫӗнтерӗпӗр эпир куллен».

— Ӑҫтан-ха эс? — тесе ыйтать.
— Чӑваш.
— Пӗлеп: ӗҫчен ку халӑх.
Талантлӑ, тӳсӗмлӗ, сӑпайлӑ.
Маттур сынсем нумай унта...

---

* Беато-фра Джованни да Фьезоле (1387—1453) Итали художникӗ. Возрождени вӑхӑтӗнче чиркӳ ӑна святойсен йышне кӗртнӗ.

Мухтавлă Горький сĕнĕвне
Художник асĕнчен ямарĕ,
Кунти çынсен ĕçне-хĕлне
Тĕпчевçĕ куçĕпе сăнарĕ.

«Итали çыннисем», этюд —
Вуншар. Ав, «Пулăçсен çыранĕ»...
Куракансемшĕн пулмĕç ют,
Мĕн-ма тесен, савса сăнанă.

Хаваслă та ĕçчен ку халăх
Юрри-халапĕ темĕн чул,
Пиншер çулсем упраннă халлă.
Паян та иксĕлмест çав мул.

Чĕлхи, чĕлхийĕ пулăшать пуль,
Епле вăл кĕвĕллĕн янрать!
Хĕвелĕ ырлăх сапалать пек,
Каланăн: «Рим вăл пултарать!»

Юмах çĕршывĕ ку тесен те,
Чун туртăнать Руç çĕршывнех.
Чĕрешĕн ырăрах ун енĕ,
Чĕнет ир-кац вăл хăй патнех.

Пуш алăпа вĕсем каймаççĕ:
Куракана кăтартмалли,
Тивĕçлипе мухтанмалли
Кÿмесенче чылай хальхаççăн.

«Сыв пул, асран кайми Итали!—
Тет Кокель,— шухăша путать.
Чăвашшăн алăку сан халĕ
Яр уçă пулчĕ.
Уншăн тав».

Хумсем, хумсем мала чупаççĕ
Е çапăнаççĕ çырана.
Тусем мăнаçлăн, шăп тăраççĕ:
«Тепре килсемĕр хăнана».

## Петербургра

Инçе çул хыççăн канлĕ, ыră,
Туйса тăма Руç ăшшине.
Эсир унран лайăххине
Тупаймăр çав ниçта та урăх.

Халь академире шăв-шав:
«Выставкăна ĕçсем тăратнă!»
Пуплеççĕ пурте:
«Пит талантлă,
Қашни экзотикăшăн тав!»

«Итали сыннисем» текен
Қартина патĕнче чылаййăн.
Ытла та кăсăклă иккен.
Çавна ырлаççĕ сăмах майăн.

Сверчков* та, Қотов та кунтах...
Çынсем хĕрсех, ав, калаçаççĕ:
«Эс тивĕç мухтанма чунтан,
Ăста янташупа хальхаççăн».

Ик тус—студент, халь вĕренеççĕ.
Вĕсемшĕн Қокель — идеал.
Сверчковшăн Қокель—«хамăръял»,
Ун сăмахне пит ĕненеççĕ:

---

* Н. Қ. Сверчков — чăваш художникĕ. Вăл П. И. Қотов художникпа пĕрле академире вĕреннĕ.

Камран ăс-хал илмеллине
Çамрăксене пĕрмай хистерĕ,
Кардовский, Чистяков класне
Май тупăр çырăнмашкăн терĕ.

Паллашнăччĕ Сверчков унпа
Серов вилни çитсен çулталăк.
Пумилккене шăп çав ятпа
Шаляпин килнĕччĕ.
Мĕн калăн,

Тусне чунтан юратнăран
Малтан вăл чиркӳре юрларĕ.
Студентсене вара кайран
Кĕрлевлĕ сассипе пăлхатрĕ.

— Алеша, ухнем,— терĕ туслăн
Ăна Шаляпин тĕлпулсан,—
Çут тĕллевне хыт шаннăран,
Кунçул тин пулмĕ сан çур пуслăх...

Кайран професcорĕ, студенчĕ
Пĕрле юрларĕç савăнса.
Шаляпин питĕ тĕлĕнтерчĕ,
Паян та вăл килет аса.

Ак унтанпа ик çул ăсанчĕ,
Çӳрерĕ Кокель инçетре.
Сверчков ăна курсан пăлханчĕ,
Епле кăлт-кăлт тапать чĕре.

«Мăнкăмăллă, хăюллă, пуçлă,
Аслисене калать куçран...»
Ун юлташне хаклаççĕ пурте
Сăмах тухсассăн çапларах.

—Эй, хамӑръял!—пуплет хавассӑн,—
Сывах-и, пурӑнан епле?
Ҫаласӑвӗ, ак, ик чӑвашӑн
Юхма пуҫлать шыв пек тӳлек.

Студент тени вӑл кӗвӗҫ мар-и,
Тӗл лектерет сӑмахӗпе:
— Вӑт, шӑрчӑк, кур-ха, сӑмахларӗ
Ҫак выставка авторӗпе.

Художник Кокель пӑлханса,
Ҫынсен умне тухса пуҫ тайрӗ.
Чылай, чылай вӑл хуравларӗ,
Сверчков шутларӗ савӑнса:

«Чӑвашсенчен * халь виҫҫӗн эпӗр
Ҫак академи ҫуртӗнче.
Ҫук, хӗсӗр мар-ха ҫут тӗнче,
Тивлетлӗхе хыт ӗненетпӗр...»

## Мускавра

Чухлатӑн-ха эс, вулаканӑм,
Хӑш чух герой чирленине.
Вара чӗре шуйханчӑк манӑн,
Пайлас килет пӗрле тертне.

Мӗн тӑвӑн? Пурнӑҫӗ ҫапла-тӑр:
Хӑналӑхра кӑна эпир.

* Петербургри академире А. А. Кокель хыҫҫӑн Александр Алексеевич Александров та вӗреннӗ. Вӑл Ҫӗрпӳ хулинче 1884 ҫулта ҫуралнӑ. Академи пӗтернӗ хыҫҫӑн Благовещенскра ӗҫленӗ. Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче, Япони оккупанчӗсем хуҫаланнӑ вӑхӑтри 1920 ҫулсенче, тифпа чирлесе вилнӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче паллӑ художник пулнӑ.

Çут тĕнчере миçе талантăн
Куç хупăнна ытла та ир.

Çавна-и систерсе каларĕç
Врачсем те:
— Кокель, каймалла.
Урăх çĕрте эс тупăн ĕç,
Сан чир-чĕртен сыхланмалла.

Ах, самани те ырă мар-çке:
Пăлхавĕ, выçлăхĕ, вăрçи.
Пит никресленчĕ çут тĕнчи,
Çын чĕринче ӳсет хаярлăх.

Шăп çавăнпа ăна тӳр килчĕ
Куçса каймашкăн Мускава.
Сисетĕн, вулакан, хăвах,
Кунта ун çук хваттерĕ-килĕ.

Çапах та вăл пуçа усмарĕ,
Кĕç тупрĕ хулара кĕтес.
Йӳнеçтерсе пурăнкаларĕ,
Пулăшăвне камран кĕтес?

«Куçса çӳрен юлташлăх» теççĕ
Кунти выставкăна çынсем.
Художник та ĕçсем сĕнсеччĕ:
Епле хакласçĕ хуçасем?

«Çемье портречĕ», «Атăл çырĕ»
Е тепĕр ячĕ «Кухньăра».
Кĕç пичетленчĕç журналра.
Хăть мĕн кала — ку чуншăн ырă.

Анчах та кăмăл лăпкă мар,
Çаксемшĕн-и вăл тăкнă тар?

Пурнать-çке Кокель кĕлмĕç евĕр,
Кунсем шăваççĕ-çке тĕллевсĕр.

«Шăпамшăн ман çапăçмалла,
Ăна йăлт улăштармалла...»
Вăл Репина пит тархасларĕ,
Çыру, ак, ун патне ăсатрĕ.

Кĕтни, шанни ахаль пулмарĕ,
Манман ăна вĕрентекен:
«Çак çырăва илсен,— вуларĕ,—
Çула тухма эс хатĕрлен.

Сан ыйтăвна йăлт татса панă,
Пуçлăхсемпе хамах калаçнă.
Пуçтарăн Харьков хулине,
Унти художниксен шкулне.

Вакантлă вырăн пур унта.
Анчах ан яр эс ман ята.
Сана телей сунатăп эпĕ,
Хисеплесе —
Профессор Репин».

Ача пек Кокель хавасланчĕ,
Пуç тайрĕ Репина манманшăн:
«Профессăрăм, тавах, тавах...»
Çул-йĕрĕ унăн — Харькова.

### Художниксен шкулĕнче

Тӳлек те ырă Украина,
Эп ăнтăлнă сана курма.
Лекетĕп ытамна халь тин ак,
Татасчĕ тетĕп парăма.

Левченкăна епле-ха манăн?
Атте пек пулăшрĕ куллен.
Хĕрӳленсе çунатчĕ маншăн,
Ялан калатчĕ: эс вĕрен.

Вăл ал паман-тăк, кам-ха калĕ:
Епле пулатчĕ-ши кунçул?
Ун пилĕпе çӳретĕп халĕ,
Эппин, чĕрем, хĕлхемлĕн çун!

Шăпа...
Унтан ниçта тараймăн,
Эп пурĕпĕр телейлĕ çын.
Анчах пăхкаласан ун-кун,
Тивĕçĕме йăлт пурнăçлаймăп.

Чуна парса ĕçлемелле,
Ыр ятăма çĕклемелле.
Салам, салам, ват Украина,
Çĕрне-шывне, ак, куртăм тин çеç.

Тӳрех ыр ĕмĕтсем çуратрăн,
Çемçетрĕн чурăс кăмăла.
Кунта килсе эп йăнăшмарăм?
Эппин, пĕрле пулар ялан.

Художниксен шкулне çитсен,
Çакна та Кокель асăрхарĕ:
Кунта вĕрентекенĕсем
Нумай ĕçе тăваççĕ харăс.

Мĕн-ма тесен, вĕсем, чылайăш
Ăс пухнă академире.
Такамшăн та ку ĕнтĕ лайăх,—
Юп курăн килĕшӳлĕхре.

Кардовский, Репин мелĕсем
Саккун пекех кашнишĕн хаклă.
Çакна асра тытсан, ăс-хакăл
Тĕллевлĕ пулĕ студентсен.

Любимовпа Прохорова,
Гредескулпа Воробьева *,
Нумайăшне вăл килĕштерчĕ,
Кашнийĕнпе сăмах килтерчĕ.

Хаяр вăрçи кĕрленĕрен,
Укçи-тенки çитмест.
Мĕн тăвăн?
Майне шырамалла куллен,
Пулсассăн та кунçулĕ тăвăр.

Юрать-ха, çав Раевскисен **
Театрĕ нушаран хăтарчĕ,
Спектакльти тупăшсенчен
Чылай пайне шкула куçарчĕç.

Любимов мăшăрланнă чух
Çипуçĕ Кокелĕн начарччĕ.
Уяв валли костюм та çук,
Çакна Раевскисем чухларĕç.

Ашпиллĕн сĕнчĕç ак вĕсем:
«Çак костюма виçсе пăхсамччĕ»,—

---

* Любимов А. М.— Харьковри художниксен шкулĕн директорĕ, Прохоров С. М.— вĕрентекен, художник, Гредескул А. А.— библиотека заведующийĕ, Воробьев В. П.— анатоми профессорĕ. Вĕсем пурте çав вăхăтра А. А. Кокельпе пĕрле ĕçленĕ.

** М. Д. Иванова (Раевская) — художник, С. А. Раевский — Раевскаян упăшки. Вĕсем Харьковра хăйсен вăйĕпе театр тытса тăнă.

Пит ырă çĕнĕ тусĕсем.
Художник вăрттăн намăсланчĕ...

Ĕçре хăйне кăтартрĕ лайăх,
Таланчĕ пур-ха йăпанмалăх.
Анчах та самани куллен
Вăрçа пула курнать сивлек.

**Пĕрремĕш ректор**

Кĕрлерĕ тăвăл Раççейре —
Çак саманта мĕн чухлĕ кĕтнĕ.
Ĕçхалăхĕ тин ирĕкре —
Патшан, буржуйăн влаçĕ пĕтрĕ.

Ăçта ан пыр, «юлташ» сăмах
Янрать тӳлеккĕн те чĕнӳллĕн:
«Çĕклен çĕн пурнăçшăн тăма,
Кивви нихçан ан пултăр ӳлĕм!»

Тăшман çавах чее-ха шутсăр,
Хамелеон хăйне кура:
Тирне улăштарать те путсĕр,
Тăвать вăл шурăран хура.

Ĕнер пуçне пит каçăртатчĕ,
Паян вăл чухăншăн юлташ.
Е хĕрхенӳсĕр мăшкăллатчĕ,—
Халь пăх та кур—ытла йăваш...

Пур çĕнĕ влаçăн ырă енĕ:
«Çĕр—хресчене!» «Мир—халăха!»
Çакна курасшăн ĕмĕтленнĕ.
Çунни пулмарĕ кăлăхах.

Йышлаичĕ Кокелĕн ĕç-хĕлĕ,
Анчах та вăхăчĕ сахал.
Ура çинче тăрать хăй тĕллĕн,
Çитинччĕ яланах вăй-хал.

Вĕрентмелле техникумра,
Каçхи шкулта, институтра!
Шухăшласассăн, тĕлĕнетĕн:
Епле, епле-ха ĕлкĕрет вăл?

Çак ĕç те уншăн пит сахал-тăр,
Ĕçлет тата Комитетра *.
Хăйне хушать:
«Юлхавлăн ан тăр,
Халь вăхăт наййкăшма çукрах!»

Студенчĕсем те тĕлĕнеççĕ:
Епле-ха вăхăтне тупать?
Ана мухтаççĕ, хисеплеççĕ,
Вĕсемшĕн—Кокель—сумлă ят.

Наркомпросра сĕнŷ парсассăн:
«Çĕн ректор суйлăр хăвăрах».
Вĕренекенĕсем пĕр саслăн
Каларĕç:
«Пулĕ вăл анчах.

Чунне паратъ, ĕçлет ир-каçăн,
Кану мĕнне пĕлмест пачах.
Пĕлетпĕр: çыхăннă вăл тачă
Пирĕнпеле. Суйлар ăнах».

---

* Революци хыççăн А. А. Кокель тĕп ĕçĕсĕр пуçне, Харьковри рабочисен каçхи пĕрремĕш техникумĕнче, професси паракан шкулта, коммуналлă тата строительсен институчĕсенче вĕрентнĕ, Украинăри художниксен пĕлĕвне çĕнĕлле йĕркелес енĕпе ĕçлекен Комитетра вăй хунă.

Малтан, ак, Кокель аптăрарĕ:
«Эп пуçлăх? Ректор паянтан?
Кĕтмен çĕртен ку пулчĕ мар-и?
Мĕнех, ĕçлес пулать шансан».

Художниксен шкулне ят пачĕç:
Вăл ĕнтĕ халĕ «институт».
Украйнăра ун паллă ячĕ:
«Пĕрремĕш ректор, çирĕп ут!»

## Турханта

Каллех, каллех тăван ялта эп,
Турханăм, йышăн ывăлна.
Çӳрерĕм-ха, пĕлсем, таçта та,
Çапах та çывăх эс мана.

Йĕри-тавра — ĕлккенлĕх, тăплăх,
Йĕри-тавра халь кĕркунне...
Кунта епле илемлĕ шăплăх,
Чунра çĕн кĕвĕ çĕкленет.

Хула шăв-шавĕ хыççăн ырнă
Ӳт-пӳ теме кĕтет, шанать.
Чăнах, тăван енре пит ырă,
Кашниййĕ ăшшăн саламлать.

Эппин, манман-ха, астăваççĕ,
Ара, кун кӳрнă-çке ялта.
Ыйтса пĕлеççĕ, сăмахлаççĕ:
«Кунçул улшăнать-и пăртак?»

Татах ыйтаççĕ:
— Пуçлăх Ленин
Çуралнă-им çут Чĕмпĕрте?
Ун ашшĕне аван пĕлетпĕр,
Шкулта вăл пулнăччĕ пĕрре.

Çĕн пурнăçăн тӳлек сăнарĕ
Хресчен чунне, ав, тыткăнлать.
Кун пек пулсассăн, шурă çарăн
Сăх ĕмĕчĕ кĕç путланать.

Çакна курма пĕлет-ха Ленин,
Ăна ĕçхалăхĕ шанать.
Эппин, кунçулĕ илемленĕ,
Ĕненӳре пурах хăват.

Художник Харьковра ӳкерчĕ
Деникина йĕкĕлтесе *.
Юлташĕсем:
«Аван ĕç,— тетчĕç,—
Ан капайланччăр йĕксĕксем».

Ун хыççăн уйрăлма тӳр килчĕ
Юратнă хулапа, ĕçпе.
Чунра амаланатчĕ çилĕ,
Сăх тăшмана тарăхнипе.

Çапах хăйне лăплантаратчĕ:
Уявĕ пулĕ пирĕн те.
Çĕн самани халь пит пăтранчăк,
Анчах шанатпăр ĕмĕте.

Брянск фрончĕ хыççăн акă
Каллех çакланчĕ Мускава.
Унта сывалчĕ, хурлăх чакрĕ:
Тухтăрсене тавах, тавах.

Халь Турханта, ĕç пулманран,
Нуши хистенĕрен пурнать-ха.

---

* «Деникин путсĕрĕсем хăйсен вăхăтлăх çĕнтерĕвне епле паллă тăваççĕ» картина пирки сăмах пырать. Унăн тиражне ӳстерсе фронтра пур çĕрте те салатнă.

Иванĕ — тетĕш — тарават-ха,
Çавах ун каймалла ялтан.

Наркомпросра ăна сĕнсеччĕ:
Мел тупăр Чĕмпĕре çитме.
Анчах унта тиф иртĕхетчĕ,
Май çук-çке хулана кĕме.

Вăл хăнăхман лармашкăн ĕçсĕр,
Шухăшĕсем те вĕçсĕр-хĕрсĕр.
Тивĕçтерсе чун ыйтнине
Ӳкерчĕ Ҫокель пир çине:

«Çуна çул-йĕрĕ», «Савăк юрă»
Ҫун курчĕç Турханта часах.
Вăл сăнарласшăнччĕ татах,
Анчах та май пулмарĕ урăх...

## Хăрушă каç

Ялта пăлхав.
Шан-шан! шаккаççĕ
Иван чӳречине çынсем:
— Мускав агенчĕ! Тух!—хушаççĕ,—
Сана вĕлермелле персе!

— Лекçей! Лекçей! Сана чĕнеççĕ,—
Иванĕ хытă пăлханать.—
Эс тухмасан çурта чĕртеççĕ,
Тен, май килсен, тарма пулать?

Ăçта унта — хăпма пулмарĕ,
Ҫӳпкерĕç, хупрĕç мунчана.
Сых ячĕшĕн хурал хăварчĕç:
«Ырап суд тăвăпăр сана!»

Мунчи... Мунчи...
Ку — хура пӳрт-ҫке,
Ачалăх иртнĕ ҫакăнта.
«Шăпа тени...
Нивушлĕ пӳрчĕ
Вилсе выртма тăван ялтах?»

Пуҫра, пуҫра пин тĕрлĕ шухăш:
«Ҫак касмăкран епле тухас?
Камран-ха пулăшу ыйтас?
Пăлханакан хаяр та суккăр».

Шăмшак сурать.
Чакать вăй-халĕ
Хĕненĕрен куштан-тăшман.
Ҫаспа тараймасан—ку паллă:
Масар ҫине лекен ыран.

Пурнас килет. Мĕн чухлĕ ĕмĕт
Художникăн пурнăҫланман,
Хăй хыҫҫăн йăх та хăварман,
Ҫапла ытла кĕске-шим ĕмĕр?

Тĕттĕмленсен:
«Лекҫей, ку эпĕ»,—
Палланă сасă илтĕнет.
Мĕскер ку? Тĕлĕк тĕлленетĕп?
Ҫук. Ҫук. Чим. Чим.
Такам чĕнет.

Ара, Наҫук-ҫке ку.
Наҫукăм!
Епле май тупрĕ-ха килме?
Савăннипе юхать куҫҫулĕ.
Ма пытарас? —
Ăна кĕтмен.

Кĕç шăппăн уçăлать те алăк.
Хĕрарăм васкаса кĕрет.
— Сывах-и?
Тармалла. Хуралçă
Пӳртре пĕччен кӳпет эрех.

Иван — чее. Вăл майлаштарчĕ,
Çăра уççи мана вăл пачĕ,
Пӳртре ларать халь сӳтĕкпе,
Шухăшĕпе хăй пирĕнпе.

Пытан лупас хыçне.
Мăнтарăн,
Утма та эс пултараймастăн?
Часах эп!—Хупрĕ алăкне.
Пытарчĕ те вăл уççине
Васкарĕ пулăшма ăна:
— Çутăличчен тарар, тăванăм.
Анчах тăхта.
Сахал-çке шанăç.
Кӳлме тивет пуль лашана...

Ял хыçĕнче часах тĕл пулчĕç.
Ытла кĕске çу қаçĕ. Мур.
Йĕрлемесессĕн — ĕмĕт тулĕ,—
Пуплет Наçук.— Лаши маттур.

Пире Улатăра çитерĕ,
Эп таврăнăп киле кайран.
Тавах турра, тин хăпрĕ терчĕ,
Тетӳ халь савăнĕ чунтан...

Вăранчĕ ыйхăран вăрманĕ,
Сас пачĕ шăпчăк ĕшнере.
Хăрушă каçĕ те пулман пек,
Мĕн калăн: пурнăç вăл хитре!



## ТӐВАТТӐМӖШ ПАЙӖ

### Хӗрӳ кӗрешӳре

Хуҫаланать тем тӗрлӗ юхӑм:
«Футуристсем», «Новаторсем» —
Искусство айккинчи ҫынсем
Ытла та ӑслӑ-ши е суккӑр?

Наркомпросра вӗсем вӑй илнӗ:
Реализма сивлеҫҫӗ шав.
«Таса художник халӗ вилнӗ»,—
Ҫӗҫҫе пите вӑт пыр та шан.

Ӑҫтиҫуксем: «Пролетискусство
Йӑлт пулӗ пирӗн ҫӗнӗлле,
Ӗҫхалӑхне вӑл кӳрӗ усӑ»,—
Павраҫҫӗ.
Те ӗненмелле?

Малевич «Тăваткалĕпе» *
Реализма сиплетĕп тет-ха.
Чăнах, кроссворд-фокуссемпе
Айвансене тĕлĕнтерет-ха.

Вăхăтлăха çеç ку шăв-шав.
Çурхи кунра ейӳ пулсассăн,
Çӳп-çап тени чылай çыранăн,
Шыв тарсанах — чакать вăл, ав.

Футуристсем пĕрмай хур кӳчĕç,
Хăварчĕç ĕçсĕр Ҡокеле.
Вĕсем института та хупрĕç,
Çук, хăтланмарĕç этемле.

Ассоциаци пуçлăхне **
Пит йывăр пулчĕ-ха. Çапах та
Памарĕ тăшмана вăл маххă,
Чылайăш тăчĕç ун енне.

Художниксем пĕлтерчĕç уççăн:
«Çĕнтерĕпĕр ултавлăха.
Сума сăватпăр халăха,
Унпа утатпăр таччăн, туслăн».

Ват çерçие эс улталаймăн
Нихçан та хывăхпа тени
Чăнах иккен.
Ҡаларăш лайăх.
Пурнăçланать шанса тăни.

---

* Малевич Ҡ. С.— «Хура тăваткал» картина авторĕ. 1920 çулсенче Харьковра пурăннă.

** Червоннăй Украина хурожникĕсен Ассоциацине вăл вăхăтра А. А. Ҡокель ертсе пынă.

Шавла-шавла футуристсем,
Тем тӗрлӗ «палӑксем» уҫсассӑн,
Ҫӗҫ вӗсене рабочисем
Аркатрӗҫ:
Памӑпӑр кулмашкӑн!

Пушӑлӑха, суялӑха
Ҫирек хӑҫан та сивлӗ халӑх.
Ултав хӳри кӗске — ку паллӑ.
Савать вӑл аслӑ Чӑнлӑха...

Вулакана эп пӗлтермерӗм,
Мана вӑл халь каҫартӑрах.
Хӗрӳ те йывӑр вӑхӑтра
Авланчӗ Ҫокель.
Ун чиперӗ

Художник,
Анна ятлӑскер.
Тӗрӗслӗхе саваканскер.
Упӑшкипе вӑл ҫума-ҫумӑн
Хӑй кунҫулне ирттерӗ туслӑн.

Вӗсен часах ҫуралчӗ ывӑл.
Ятне те пачӗҫ ак: Раман.
Пӗрне-пӗри ӑнланнӑран,
Пурнаҫҫӗ виҫҫӗн ыра-сывӑ.

Хӗрӳ кӗрешӳре ӑс-хакӑл
Ҫирӗпленет те вӑй илет.
Ан ҫулӑхчӑр инкек те явӑл,
Ҫун куртӑр яланах илем!

## Ёмӗтленни пурнӑҫланать

«Художникӑн кунҫул илемлӗ,—
Хӑш чух пуплетпӗр ҫапларах,—
Ӳкерчӗкре сӳнми телейӗ,
Ят-сумӗ чыслӑ халӑхра.

Пур юп курма машина, дача,
Хваттерӗ илемпе ҫиҫет.
Пур хӳхӗм арӑмӗ—ҫуначӗ,
Ачи-пӑчи чуна ҫӗклет.

Теприн ҫемье пухма ҫук вырӑн,
Йӳнеҫтерет аран-аран.
Ӗҫлет, анчах ют уншӑн ырлӑх.
«Хваттерӗ» — ҫырмари ҫуртра.

Художник пӳлӗмне кӗрсессӗн,
Аптранипе эс тӗлӗнетӗн.
Ҫут мастерской ҫӳлти хутра,
Тен, ҫывӑх вӑл атте-турра?»

Тулаш енчен пӑхсан, чӑнах та,
Ҫак йӗркесем, тен, тӗрӗсех?
Художник пирӗншӗн ахах пек,
Вӑл ҫук-тӑк—пурнӑҫ тӗксӗмрех.

Культура, тетпӗр, яланах
Ҫиес ҫӑкӑрпала танлашӗ.
Е сахалрах лексен те ашӗ,
Пуян пулсан чун—аванрах.

Ҫакна авал ӑнланнӑ лайӑх,
Илемлӗх юлнӑ мухтанмалӑх.
Рембрандт, Пуссен палитрисем
Е Репинӑн картинисем.

Çулсем иртсен те пурăнаççĕ,
Çут тĕнчене савма хушаççĕ.
Вĕсемсĕр эп ыйтап сиртен:
Мала ăнтăлĕ-и этем?

Анчах художник нушине
(Поэт та кĕрĕ ун йышне)
Эпир — кашниййĕ — ăнланмастпăр,
Чĕри çунать-и — чухлаймастпăр.

Мĕн чухлĕ тар юхтарнине
Халех, кайран-и хаклĕ вăхăт.
Пĕришĕн пулĕ вăл пит тăкăс,
Тепри тупать чăн вырăнне.

Тĕп темăран, асри юлташăм,
Эп пăрăнтăм ятарласа.
Туятăп-çке, сана пĕр ташă
Алхапăл йăлăхтарасса.

Ялан пĕр çемĕ: «Ĕлĕк, ĕлĕк...
Хальхи пирки те шухăшла.
Тăр кăнтăрлах ан кур-ха тĕлĕк»,—
Вăрçан мана эс, тен, çапла?

Апла-капла-и, эп туясшăн
Чăн-чăн художник тивĕçне.
Ăна кăштах çеç чухласассăн,
Чăнах та, çăмăл чĕрене.

Ялан мала утас тесессĕн,
Пĕлес пулать ĕлĕкхине.
«Ăçта-ха Кокель?» —
Ыйтăн эсĕ.
Мĕнех, çитетпĕр ун патне.

Вăл вĕрентет те, вĕренет те,—
Кунçул хушать пулма çапла.
Студентсенче вут-хĕм чĕртет те,—
Çĕршер ăста тухать çула.

Дерегуспа Чернов, Беседин,
Яценко, Сизиков * ăна
Сума сăваççĕ.
Тĕлĕнетĕн.
Чăнах та, тивĕç вăл çакна.

Ку çеç-и? Пур-ха ячĕ-сумĕ.
Профессор, теççĕ, пуç тайса.
Сăн-пичĕ çутă, лайăх тумĕ,
Хваттер виç пӳлĕмлĕ, таса.

Çаксемпе çеç çырлахмĕ кăмăл.
Художник-ха вăл чи малтан.
Пулман нихçан та дилетант.
Шăп çавăнпа чуна та çăмăл.

Кĕрлет сасси ун çĕршывра:
«Колхозник» е «Автопортречĕ»,
«Шахтер», «Рабочине», «Построа»—
Кашнийĕ пит талантлă теççĕ.

Ĕмĕтленни пурнăçланать,
Ĕç-хĕлĕ, чăн та, ун ăнать.
Янрать тӳлеккĕн хушамачĕ,
Унпа пĕрле чăвашăн ячĕ.

---

* Дерегус М. Г.— СССР халăх художникĕ, СССР Художество академийĕн член-корреспонденчĕ. Чернов Л. И., Беседин С. Ф. Украина ССР искусствин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем, профессорсем. Яценко В. Ф.— Украина ССР искусствин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Сизиков В. В.— Украина ССР халăх художникĕ, профессор. Вĕсене пурне те тĕрлĕ çулсенче А. А. Кокель вĕрентнĕ.

## «Ликбез»

— Итле-ха, Анна,— тет хавассăн
Художник хăйĕн арăмне,—
Çыру эп илтĕм, вуласассăн,
Туяп эс савăнассине.

Чăваш патшалăхĕ ыйтать
Туса памашкăн пĕр ӳкерчĕк.
Профессор темшĕн пăлханать,
Часах вăл ĕçлеме пикенчĕ.

Эскизĕ хатĕр.
Ячĕ паллă.
Тахçан шутланăччĕ: «Ликбез».
Васкать-ха Кокель.
Хăй хаваслă:
— Уяв тĕлне йăлт ĕлкĕртес.

Эй, мăшăрăм, таçта ан кай-ха!
Сан сăн-питне ӳкермелле.
Килсем çывăхарах эс, лар-ха
Çапла. Маттур. Пăх çĕрелле.

Кулать хăй:
— Эсĕ манăн арăм,
Эппин, чунупала чăваш.
Сăну ӳкерчĕке сĕм парĕ,
Тӳлеккĕн пăх, ларсам йăваш.

Этючĕ хатĕр-ха. Çапах та
Художник тем ăшталанать:
Хресченсене шырамалла халь,
Вĕсен сăнне тупас пулать.

Хула урамĕнче çӳрерĕ
Е кĕркелерĕ пасара.
Чылай этюд туса çитерчĕ,
Тупмарĕ-ха тĕп сăнара.

Картинăри вĕрентекен
Таçта çӳрет.
Вăт ăшçунтармăш.
Пĕр ирхине:
— Эй, тăм писмен! —
Хăйне вăрçать,—
Эй, кил-ха, амăш!

Пăхать вăл мăшăрне куçран:
— Сана тахçантанпа шырарăм.
Леш тĕлĕнет:
— Ниçта каймарăм.
Килтех.
Санпа юнашарах.

— Çук! Çук! Эп урăххи çинчен.
«Ликбез» пулмасть вĕрентекенсĕр.
— Мана ӳкернĕччĕ-çке эсĕ!
— Унта ларан эс хут пĕлмесĕр.

Халь тăр ура çине. Маттур.
Мана ăс панă пек сăн ту...

Вăт çапларах...
Тинех йăлт пулчĕ,—
Художник савăнса йăл кулчĕ.

«Ликбез» картина хатĕр ĕнтĕ,
Часах вăл пулĕ Чăвашра.
Теми аван, пит килĕ, çĕнĕ.
Ăна кашни мала хурать.

Кăшт пурăнсан татах хыпар:
Ана Шупашкара чĕнеççĕ.
Çула пуçтарăнать вăр-вар,
Художник куçĕсем çиçеççĕ:

«Тăван çĕршыв — çуралнă енĕм,
Чылайранпа унта пулман,—
Пăшăлтатать,— мана кĕтен-ши?
Хапăлласах-ши йышăнан?..»

## Шупашкарта

Çăпатапа чăпта хули
Тата чиркĕвĕсем тем чухлĕ,
Шăпи епле пулать-ши ӳлĕм,
Вăл халлĕхе ют çын кулли...

Ача чухне çакна вăл илтнĕ,
Шур Шупашкарăмăр çинчен.
Сăмахĕсем чуна та витнĕ,
Малтан ĕненнĕ-и те, тен?

Чиркĕвĕсем нумай пулнишĕн
Пит кулянма сăлтавĕ çук,
Анчах та вĕсене ватнишĕн
Пăшăрханать çав чăрсăр чун.

Çапах та çĕнелӳ кунта,
Чăваш пуça çĕкленĕ харсăр.
Пуласлăха шанса утать,
Чĕнӳ аван:
«Телейшĕн кар тăр!»

Хаçат-журнал, кĕнекесем
Вулакансем патне çитеççĕ.

Ӳн тусӗсем — художниксем—
Илем куллен вӑй илтӗр теҫҫӗ.

Поэчӗсем епле хӑюллӑ,
Сӑмахӗ татӗ тимӗре.
Янравлӑ саслӑ, пултаруллӑ,
Вӑйне туптаҫҫӗ чӗлхере.

Ват Шелепи, Элкер, Ухсай,
Митта Ваҫлейӗ — ун янташӗ
Е харсӑр чунлӑ Хусанкай,
Ҫашни чӑвашӑн хурӑнташӗ.

Театрӗ хӑй мӗне тӑрать,
Артисчӗсем асамҫӑ мар-и?
Сана култарӗҫ, кулянтарӗҫ,
Мӗн чухлӗ вӗсенче хӑват!

Юрри-кӗвви епле хаваслӑ,
Ҫӗн пурнӑҫа савма чӗнет.
Чӑвашӑн чунӗ чӑн та аслӑ,
Упрать хӑй телейне-халне.

Хула ӳсет.
Мӑн ҫунатне
Ҫараппӑл пек сарать вӑй-халлӑн.
Ҫалать пӑхса сӑртсем ҫине:
«Ҫырмасенчен часах тухатӑп!»

Профессоршӑн кашни сӑнар
Нихҫанхинчен те ҫывӑх, ҫывӑх:
«Салам,—тет вӑл,—манми ҫӗршывӑм,
Саватӑп чунтанах сана!»

Сверчков та ҫитнӗ хулана,
Ик тус хавас ҫӗн тӗлпулушӑн.

Пĕр-пĕринчен ăна-кăна
Ыйтса пĕлеççĕ те пĕр хушă,

Сăмах татаççĕ: килмелле,
Шупашкарта ĕçлемелле.
Пит кăсăклă çак шухăш-ĕмĕт,
Анчах сӳнмест-ши унăн хĕмĕ?

Çакна вĕсем халь чухлаймаççĕ,
Сăпайлăн, ăшшăн калаçаççĕ.
Ыран мĕскер пулассине
Пĕлмест никам та хăш чухне.

Чăнах та, Кокельшĕн хула
Çумри тăван пекех пит ырă.
Шутлать хăй ăшĕнче çапла:
«Таврăнмалла.
Май пулмĕ урăх».

Кунта «Ликбез» картинăна,
Шедевр ку, тесе хакларĕç.
Хаçатсенче те паллаштарчĕç,
Вăл килĕшрĕ куракана.

**Тиххăнпа тĕл пулни**

— Кĕме юрать-и?
— Кĕрĕр! Кĕрĕр!
Вăтам çын малалла иртет.
— Эс — Тиххăн-çке.
Эп кам-ха теп.
— Манман, иккен.
Шăп çавă. Тĕрĕс.

— Мĕнле хыпарсемпе çӳретĕн?
Ирт кунтарах.

Çума ларсам.
Ыталансан:
— Чăнах, килпетлĕ,—
Тет Тиххăн Ķокеле пăхса.

Сăмах-юмах çитет пине те,
Хыпар-хăнарĕ пит нумай.
Ķунсем шăваççĕ-çке черетлĕн,
Миçе çул пĕр-пĕрне курман!

— Ĕçтăвкомра ĕçлетĕп эпĕ*,—
Тет шухăша кайса хăна,—
Мана вăрçатăн пулĕ, теп, эс:
Çук, çăлаймарăм Ивана.

Ķарачăмпа ** пĕрле ăна
Асатрĕç Çĕпĕре шеллевсĕр.
Арман тытатчĕç. Эс çакна
Манран та лайăхрах пĕлетĕн.

Эп — вата коммунист.
Сисетĕп:
НĶВДрисем кăра.
Тӳр кăмăллă çынсем пĕтеççĕ.
Пурнатпăр-çке хăра-хăра.

Илтсеттĕм: тĕрĕс-и, суя-и,
Ķилесшĕн эсĕ Чăваша.
Кĕрсе ӳкен терте, туятăп,
Ан ту-ха çакă йăнăша.

* Çак вăхăтра Т. Ф. Осипов Турхан районĕн ĕç тăвакан комитетĕнче председатель заместителĕ пулса ĕçленĕ.

** Ķарачăм Пирогов — А. А. Ķокелĕн тăванĕ. Вăл Çĕпĕртен таврăнсан Турханта вилнĕ. Иван пиччĕшĕ Çĕпĕртех вилнĕ.

Пĕр-пĕр çăхав çитсен, асилĕç,
Сан тăвану пуп пулнине *.
Сăлтав пулсан, влаçсем пит çиллĕ,
Пăхмаççĕ ыр ĕçӳсене.

Чылай чăваш, пĕлетĕн, кĕвĕç,
Шав ăмсанать вăл кӳршине.
Айăплансан, тирне йалт сĕвĕç,
Чухла сăмах пĕлтерĕшне.

Аптрарĕ Кокель.
Унăн тусĕ,
Шухăшласан, пĕлсех пуплет.
Художника кӳресшĕн усă,
Вăл лайăх пултăрччĕ-çке, тет.

— Тĕпчерĕм маларах:
Ма килтĕн
Ĕçне мансах Шупашкара?
— Сана курасшăнччĕ эп питĕ,
Эс йăнăш тăвасран хăрап.

Кулак ятне илтекенсем,
Тĕрĕссипе, ĕçлекенсем.
Сăлтавсăрах шар курчĕç, тусăм,
Мĕн чул çемье арканчĕ уссăр.

Çӳлтен хушу парсах тăраççĕ,
Мĕн тăвăн-ха: пăхăнмалла.
Вĕсен планне тултармалла.
Хирĕçлесессĕн — хăратаççĕ.

---

* Кунта сăмах А. А. Кокелĕн пиччĕшĕ Кĕркури пирки пырать. Вăл пуп, каярахпа архиерей пулнă. Çĕпĕре куçса кайнă.

Хăш чух, чăнах та, тарăхатăп:
Усал тăвас тесе çынна
Эп лекрĕм-ши катăркăна?
Унта яш кунсене хăвартăм.

Эп пĕлнĕ Ворошилова та,
Унпа ĕçленĕ Луганскра.
Шутлатăп та: таçта каятпăр,
Иккĕленӳ хăпмасть манран.

Çитет пуль.
Ним те пытармарăм,
Чуна йăлт уçрăм та; ак, халь
Туяп: çĕкленчĕ пек вăй-хал,
Шухăшăма йăлтах каларăм...

Итлерĕ Кокель хăй тусне:
Вăл илтменни мĕн чухлĕ унăн!
Пĕлмен çĕршывăн пурнăçне,
Ăна тулаш енчен çеç курнă.

Ыр ĕмĕтсем, сисмен те, тарчĕç.
Ăнланчĕ çул хупăннине,
Шупашкара килессине
Художник чун тĕпне хăварчĕ.

## Хаяр çулсем

«Украйнăра халь «çĕн йĕрке»,—
Ăçтиçуксем пĕрмай шавлаççĕ,—
Большевиксен кунçул кĕске,
Серепене кĕç çакланаççĕ.

Мускавĕ — чапĕ — тĕп хули
Пире час парăнать шăв-шавсăр».

«Пулман-ха вăл тăшман кулли»,—
Хай ăшĕнче шутлать профессор.

Тыла каймашкăн май пулмарĕ.
Мĕн тăвăн?
Халь ак чăтмалла.
Çĕнтерӳччен пурăнмаллах.
Вăй-халĕ пур-ха Хĕрлĕ Çарăн.

«Çĕн хуçасем» ăна пĕрмай:
«Институтра вĕрент эс»,— терĕç.
Май пулчĕ-ха сăлтав тупма:
«Курмастăп эп.
Тин çеç сиплерĕç*.

Фашистсене пула çунтарчĕ
Архив хучĕсене кĕçех.
Мĕн-ма тесен, ун хушамачĕ
Вĕсен хура списокĕнче.

Шаляпин, Горький, Луначарский,
Маковский, Репинпа Кардовский
Е Чистяков çырăвĕсем,
Епле пит кирлĕччĕ вĕсем.

Анчах та пурнăç хаклăрах,
Хушать тăма вăл сыхăрах.
Чылай картинине пытарчĕ,
Ун хыççăн çеç хăрушлăх тарчĕ.

Рамане, арăмĕ килтех.
Чирленĕ, авă, иккĕш те.
Ытла та пурăнăçĕ йывăр,
Куллен хавшать кашниĕн сывлăх.

---

* Вăрçă пуçланас умĕн А. А. Кокелĕн куçне операци тунă.

Çак тамăкран епле тухас?
Пурнăçăмра ыхлаç* юлас?
Тен, пăханас?
Çук! Çук! Хăрушă.
Кун пек пулсан, кунçул та пушă.

Ун мăшăрĕ самайлансассăн,
Çӳрерĕ пасара час-час.
Пĕр ĕмĕт çеç унра хальхаççăн:
«Этюд сутса укçа тăвас».

Пĕррехинче (ун чух хĕллеччĕ)
Вăл хваттере çитет аран.
— Мĕн пулчĕ, амăшĕ? — унран
Ыйтать профессор,—
Пĕлтерсемччĕ.

— Алеша,—яваплать вăл шăппăн,—
Фашист, чăнах та, чунилли.
Юлмарĕ иккĕленмелли...
— Йăлтах кала»—
Пуплет леш лăпкăн.

Вĕсем Ильич палăкĕнчен
Епле пит ирсĕррĕн кулаççĕ.
Пĕлетни, унăн аллинчен
Чăн-чăн геройсене çакаççĕ...

Профессор тарăхать:
Хăçан
Çак йăх Европăра вăй пухрĕ?
Ăна пула мĕн чул юн юхрĕ?
Тен, хамăр суккăр пулнăран?..

---

* Ыхлаç — тӳрĕ кăмăлшăн, чăнлăхшăн тăрас тени.

Этемлĕх кунĕ йалт хуралчĕ,
Тӳлек тавралăх та пушанчĕ.
Мĕн-ма тесен — фашист урать.
Çапах та çĕнтерӳ пулать!

Сăнать профессор, йалт сăнать:
Тăшман сăн-пичĕ урăхланчĕ,
Ун ирсĕр куçĕ, кур, вылянчăк,
Эппин, чакать унра хăват.

Часах, ак, килĕ Хĕрлĕ Çар,
Унран ыйтсан: «Профессор, эсĕр
Фашист йăх-яхĕшĕн ĕçлерĕр?»
Вăл калĕ: «Эпĕ чура мар!

Ыр ятăма вараламарăм,
Ун умĕнче пуçа таймарăм.
Эп шантăм Хĕрлĕ Çар вăйне,
Часах уяв пулассине».

## Ухсайпа тĕл пулни

Хула урамĕнче шăв-шав,
Сăн-питсенче илемлĕ кулă:
«Çĕнтерекен Çара мухтав!
Вăл ĕмĕр-ĕмĕр сывă пултăр!

Тасалтăр выçă куç эшкерĕ
Сăваплă пирĕн çĕр çинчен.
Шăрши ан юлтăр ун — тискерĕн,
Пăчлантăр хăйĕн йăвинче!»

Профессор чирлĕ.
Ураран
Ӳкерчĕ выçлă-тутлă пурнăç.

Имшер.
Пĕрмай выртсах тăрать.
Мĕн калăн: тамăкра-çке пулнă.

Анчах та сăхă тăшмана
(Епле вăл кураймасть ăна)
Вăйран кайсан та, парăнмарĕ,
Чĕркуçленмерĕ, пуççапмарĕ.

Шаккаççĕ алăка тултан:
— Кĕме юрать-ши? — лăпкă сасă,
Ак, илтĕнет коридортан.
Профессор яваплать.
— Тархасшăн,
Кĕрсемĕр, иртĕр малалла.
Килти пек пулăр, ан вăтанăр.
Ку çын (погонĕ капитанăн)
Тӳлеккĕн пуплеме пуçлать:

— Тен, паллаймарăр та мана?
Ухсай эп, чăвашсен поэчĕ.
— Мĕскер эсир? Курсассăнах
Асилтĕм.
Тав сире.— Тивлечĕ
Пĕтмен иккен.—
Чăвашсене
Тахçантанпа, чăнах, курманччĕ.
Шăмшак та, пăх-ха, çăмăлланчĕ,
Чухлатăр-и-ха сăлтавне?

Вăл эсĕр, эсĕр килнĕрен,
Тав сăмаххи ман чĕререн.
Кĕç юхрĕ калаçу ăшпиллĕн,
Ухсай тĕпчет, пĕлесшĕн питĕ:

— Пĕр вăхăтра Шупашкара
Эсир куçса пыратăр тетчĕç.

Сӑлтавӗ, калӑр-ха, камра?
Сире, ҫӑнах та, хыт кӗтетчӗҫ.

— Ҫӑрмавӗ пулчӗ ҫав, тӑванӑм,—
Профессор сӑмахлать хуллен.—
Эсир, эсир чипер ӑнланӑр,
Сӑлтав манран кӑна килмен...

Пӗлтерчӗ шухӑш-кӑмӑлне,
Чунне йӑлт уҫрӗ, пытармарӗ.
Иванӑн, Ҫӗркурин ятне
Аса илмесӗр хӑвармарӗ.

— Шӑпа... Мӗн тӑвӑн?... Эпӗ хам та
Ҫӑтса ирттертӗм-ха тертне.
Тӳр килчӗ ҫав пулма теҫта та,—
Ухсай асилчӗ кунҫулне.—

Ҫӑхав яратчӗҫ «туссемех»,
Ҫыравҫӑсем, ҫӑнах та, шӑллӑ...
— Ҫапла, ҫапла вӑл пурнӑҫ, шӑллӑм,
Нуши, кур, ман та сан — пӗрех.

Ҫирек кама та паллӑ ӗнтӗ:
Тӑван ҫӗршыв вӑл — тӑванах.
Унти кашни кӗтесӗ — ӗнчӗ,
Ҫӗре те йышӑнать ӑнах.
Пытармӑп: шухӑшра каҫ-ирӗн
Ҫӳретӗп савнӑ ялӑмрах.
Тавралӑхӗ пит ырӑ пирӗн:
Вӑрманӗ хӑй мӗне тӑрать!

Пырас пирки татсах калаймӑп,
Пит йывӑр уйрӑлма кунтан.
Шупашкарта халь йышӑнаймӗҫ,
Ҫӑрмантарма та хал ҫук ман...

— Чӑрмавӗ-мӗнӗ.
Унсӑрах
Иртмест-ха шавлӑ пурнӑҫ пирӗн.
Сире систерӗп каярах,
Ыйтса илетӗп пурпӗр ирӗк...

(Вулакана эп пӗлтересшӗн,
Хӑй сӑмахне Ухсай манман.
Ҫӗнтерӗве кӗтсе илсессӗн,
Профессора асран яман.

Ужгородран, раштав ҫитсен,
Вӑл Кокеле ҫапла пӗлтернӗ:
«Эсир пырас пирки систертӗм,
Сире кӗтет халь Чӑвашъен...»)

## Пысӑк ҫухату

«Ир такӑнсан — каҫчен»,— тесе
Каланӑ авалах ман халӑх.
Шӑпа хӑш чух хыт силлесе
Никам пӗлмест—ку ӗнтӗ паллӑ.

«Тин йышӑнчӗҫ!
Салтак халь эпӗ!
Атте, инҫе ҫула пилле.
Анне, ан пӑшӑрхан, хисепӗ
Пит пысӑк.
Таврӑнӑп киле.

Кайран институтра вӗренӗп,
Атте пек пулӑп пурнӑҫра.
Халь ҫамрӑк-ха. Эп ӗлкӗретӗп,
Пӗлетӗр-ҫке: ҫӗршыв вутра.

Юрамĕ айккинче юлмашкăн.
Çынна куçран пăхас епле?
Тăшмансене хыт тавăрмашкăн,
Аттеçĕм, эс пилле, пилле...»

Çак сăмахсем янраççĕ евĕк,
Раман каланă вĕсене.
Анчах... анчах та çут тĕллевĕ
Путланчĕ хăвăрт.
Ун ӳтне
Ав илсе килнĕ.
Тупăкра вăл.
Выртать кĕç-вĕç тăрас пекех.
Ăна усал эсрелĕ-явăл
Хăй аллинчен ямасть текех.

Выртать ун ĕмĕчĕ-илемĕ,
Йăх тăсаканĕ тупăкра.
«Кунçулăм, ма ытла шеллевсĕр,
Телей курас чух ватлăхра?

Ман пуç çине терт-хĕн тиетĕн,
Пĕртен-пĕр хаклă ывăла,
Чун-чĕрене хуçса çапла
Иксĕмĕртен туртса илетĕн?»

Пытарчĕç Рамана часах.
Пуш-пушă Кокельсен хваттерĕ.
Мăшăрĕпе кашни кунах
Масар çинчен тухма пĕлмерĕç...

### Пурнăç—малаллах

Шухăшласассăн, тĕлĕнетĕн:
Çынра мĕн чул сӳнми вăй-хал.
Терте Антей пекех çĕнет те
Вăл ăнтăлать малашлăха.

Анчах имшер чунли хавшанчăк,
Кĕрсе ӳксессĕн сулăнка,
Малта йăлтăртатсан та шанчăк,
Çĕнтерейместь хуйха-суйха.

Тепри вара ят-сум илсессĕн:
«Эп кам?» — тет, кăкăрне çапать
Е виççĕмĕш, черкке лексессĕн,
Ăсне-тăнне йăлт çухатать.

Çын сумсăр çĕр çине килет те,
Каять нимскер илмесĕрех.
Кам пултарулăхпа тивлетлĕ,
Çав пурнĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.

Этем ĕçе пула кăна-ха
Çын пулнă тетпĕр час-часах.
Нихçанхинчен те ытларах
Професор пит хаклать çакна халь.

Кашни минучĕ шутлă унăн:
Выставкăна хутшăнмалла.
Институтра хĕрӳллĕ пурнăç,.
Студентсемпе тĕл пулмалла.

Кардовский, Репинăн эткерĕ
Кашнишĕн паллă мар йăлтах.
Тĕпчевçĕсем: «Çырса пĕлтерĕр»,—
Ыйтса тăраççĕ тăтăшах.

Мускав пухасшăн конференци,
Унта сăмах калас пулать.
Яш мар, çапах та ĕлкĕресшĕн.
Мĕн калăн?
Вăхăтне тупать.

Çĕршывĕпе мĕн чухлĕ тӳс ӳй,
Пурне те асăнма май çук.
Вĕсемпеле пуçна эс усмăн,
Ҫашни патне тупать вăл çул.

Раман вилсессĕн, чун суранĕ
Йăлт тĕксĕмлетрĕ пурнăçа.
Пĕрмай ыраттарса пуçа,
Мĕн чухлĕ шухăш ун капланчĕ?

Епле пурăнмалла?
Пĕртен-пĕр
Юратнă ырăн — институт.
Шав йăпанатчĕ: «Пĕрех хут
Ĕçре, ĕçре кăна сипленĕп».

Ун мăшăрĕ май-шыв шырарĕ
Пирчентермешкĕн сурана:
Часах сĕм-тăлăх ачана *
Вĕсем савса пăхма пуçларĕç.

Ҫутузов генерал — янташĕ **
Ҫунта тăратчĕ службăра.
Профессора тус-хурăнташ пек
Ал пачĕ йывăр вăхăтра.

Салтак кунçулĕ çывăх пулчĕ
Ҫар çыннипе тĕл пулнăран.
Салтаксемпе туслашнăран,
Тинех çĕн ĕç те, ак, кун курчĕ***.

---

* Н. А. Волков врач пирки сăмах пырать. Вăрçă хыççăн, ачалăх çулĕсенче, вăл Ҫокель çемйинче пурăннă.

**Н. И. Ҫутузов генерал-майор вăл вăхăтра Харьков çывăхĕнче службăра тăнă.

*** А. А. Ҫокелĕн «Боецсем канаççĕ» картини пирки сăмах пырать.

Пĕрле тĕлпулнă самантра
Турхан ялне аса илетчĕç:
«Ялта пурнасчĕ ватлăхра»,—
Тесе час-час ĕмĕтленетчĕç...

## Кокель монологĕ

Ыран ман юбилей, юлташăм,
Туссем пуçтарăнĕç чылай.
Тăван-пĕтенĕм, хурăнташăм
Тухаймĕç çав инçе çула.

Мĕн калăн, Павлов * калашле
(Епле йĕкĕлтесе питлет):
«Чăвашшăн вăл пит тăрăшмарĕ,
Мухтав та чап ютра шырарĕ».

Паллах, эп хамăн халăха
Сăлтавсăрах хурласшăн мар-ха.
Вăл ытлăн-çитлĕн хурлăха
Астивнĕ чылайччен, мăнтарăн.

Кун панă ывăлне-хĕрне
Сайра хутра телейлĕ тунă.
Кĕрсе ӳксен сехмет айне,
Мĕн чул талант чечек пек хухнă.

* Ф. П. Павлов. Çырнисен пуххи. I том, Шупашкар, 1962, 140 стр. «1928 çулхи «Картинăсен выставкинче» статйинче çапла çырнă: «Кокель художник — паллă ят. Ана, ахăртнех, Раççейре пур çĕрте те пĕлеççĕ. Анчах та вăл тăван çĕршывне манса кайнă та хăйĕн ятне урăх вырăнсенче сарассишĕн тăрăшать. Унăн картинисенче чăваш сăнарĕсем вырăн тупаймаççĕ. Вăл чăваш художникĕ пек пире усă парĕ-и-ха тесе шухăшлама пултаратпăр-и-ха? Çук».

Тавах Левченкона, мана
Украйнăна савма вĕрентрĕ.
Тавах мухтавлă Репина,
Телей те ăнăçу пиллерĕ.

Украйнăра, эс пирĕн, теççĕ,
Вырăсĕсем те сивлемеççĕ.
Чăваш çынни те малашне,
Шанап: асилĕ ывăлне.

Европăра та хушаматăм
(Пĕрре те эпĕ мухтанмастăп)
Хутран-ситрен илтĕнкелет,
Чăваш ятне ку чыс кӳрет.

Эппин, вăлтмасăрах ыйтасшăн,
Эп кам ачи, асри юлташ?
Çапла.
Эс тĕрĕс хуравлатăн:
Чунпа, юнпа та эп — чăваш.

Ӳпкелеместĕп кунçула,
Ют пулнă маншăн çак йăла,
Вăл пĕртте тикĕссĕн шумарĕ,
Çапах та ятăма ямарăм.

Тăван ялта тĕл пулчĕ вилĕм,
Май килчĕ пăрăнма унран.
Тавах, Наçукăн ырă пилĕ
Вăй-хал кӳрет-ха.
Вăл чакман...

Хам хыççăн йăх хăварманран
Тулли пулмарĕ, тен, ман пурнăç?
Анчах мĕн чухлĕ тӳснĕ, курнă —
Çавсем пĕр йĕрсĕр çухалман.

Чун ăшшине, мĕн пĕлнине
Эп яшсене тӳлевсĕр патăм.
Студентсене хавхалантартăм,
Савма вĕрентрĕм Ĕç Гимнне.

Юратнă ял, чăваш сăнарĕ
Нихçан та маншăн ют пулман.
Ăс-кăмăлне чунра упрарăм,
Халăхăмран эп уйрăлман!

Левченко чĕртнĕ кăвара та
Сӳнтерес çук мĕн виличчен!
Ак халь Украйна çĕрĕнче
Калап: ун парăмне йăлт татрăм.

Чăваш çĕрне асран ямарăм,
Пит шел — унта эп пурнаймарăм.
Сăлтавĕ манран çеç килмен,
Ăна, тăванăм, ху пĕлен.

Юлташăм Тихăн калашле:
«Пурнаймăн икĕпитпеле...»
Ытлашшипех йӳççи-тăварĕ—
Кунсем пĕрмай чипер шумарĕç.

Ыран ман менелник, юлташăм,
Пулатăп çитмĕл пиллĕкре.
Тăван-пĕтенĕм, хурăнташăм
Лараймĕç çав кĕрекере.

Атте-анне, тен, шутламан та:
Кун пана виçĕ ывăлтан
Пĕри те юлмĕç Турханта,
Кашни ют кĕтесе ăсанă.

Иван!
Чи хаклă çын — тетеçĕм!
Хăш çăвара выртан хальччен?
Мĕнре-ха айăпу, пĕлтерччĕ?
Çапла,
Эс пулнă çав ĕçчен.
Арман лартнишĕн сан тӳр килчĕ
Ачусемпе сывпуллашма.
Қасаматра чунна йалт илчĕç,
Çитеймĕн халь тин ялăма.

Çурта-йĕре* салатнă терĕç,
Арманĕ пĕтнĕ эс кайсан.
Вăл вырăнта пиçен те эрĕм
Ӳсеççĕ ĕнтĕ ашкăрса...

Тăван,
Тетеçĕм Қĕркури!
Ăс пухрăмăр санпа чылай.
Анчах кунçулĕ сан та манăн
Қашниййĕн пулчĕç урăхла.

Йывăрлăхра çĕн шкул та турăн,
Тав сăмахне илтмерĕн ху.
Пуп пулнă хыççăн хурлăху
Чакмарĕ.
Пулăшмарĕ турă.

Архиерей ятне илтсен те,
Ăсатрĕç пурпĕр Çĕпĕре.
Ют пулчĕ саншăн савнă енĕм,
Тĕп пултăн эс те хĕсметре...

* Çурчĕ упранса юлнă. Малтан шкул зданийĕ пулнă. Халĕ унта — А. А. Қокель музейĕ. Ăна йĕркелесе ярас тĕлĕшпе В. П. Сергеев художник-учитель чылай вăй хунă.

Ыран ман менелник, тăванăм,
Туссем пуçтарăнĕç чылай.
Епле ăшталанать, ав, Анна,
Çĕклесшĕн сӳрĕк кăмăла.

Тав сăмахне калатăп эпĕ
Юратнă, савнă мăшăра:
«Санпа чухне çеç юп-хисепĕ
Манран хăпмарĕ пурнăçра».

Ыран — уяв, асри юлташăм,
Шухăшупа кил ман пата.
Чунпа эп ватă мар-ха, яш пек,
Утасшăн санпала пĕртан.

Эй, ĕмĕт, ĕмĕт!
Çук-тăр вĕçĕ.
Таçта та çитĕн эс унпа.
Çапах ман шухăшăм, ман ĕçĕм
Юлинччĕ савнă халăхпа...

## Хыççăн калани

Хисеплĕ, хаклă вулаканăм,
Ак, вĕçленет хайлавăм ман.
Вăл еплерех, ăна ху калăн.
Тунсăхлăрах та.
Мĕн тăван?

Ват Украина çĕрĕнче
Выртать халь Кокель.
Таврăнмарĕ.
Тăвăрах марччĕ те тĕнче,
Çапах шăпи килне ямарĕ.

Профессор ячĕпе часах
Масар çинче çĕкленчĕ палăк*.
Вĕренекенĕсем, ку паллă,
Ăна пурнаççĕ тав туса.

Чечекĕ татăлмасть кунтан,
Мĕн-ма тесен, çынни мухтавлă.
Кунçул иртсессĕн те шăв-шавлă,
Ун ĕçĕ каяс çук асран.

Кокелĕме асилнĕ май,
Манма юрамĕ Çеçпĕле те.
Чернигов çĕрĕнче чылай
Выртать вăл.
Тен, ялне килесшĕн?..

Шухăшласамччĕ, вулаканăм,
Тен, тĕрĕс мар сăмахăмсем? —
Ютра выртсан тăван çынсем,
Чун ыратать-çке кирек камăн.

Чăваш çынни...
Чуну çеç аслă
Пулинччĕ, тетĕп, сан ялан.
Ачу-пăчу инçе кайсассăн,
Тархасшăн, вĕсене ан ман...

Асил, юлташ, малтан çырсаччĕ
Турханăн çыннисем çинчен.
Вĕсем ял сум-ятне сарсаччĕ,
Анчах çăви ютра хăйсен.

---

* Харьков масарĕнче А. А. Кокелĕн палăкне унăн вĕренекенĕсем Г. Д. Сова скульптор, Польша халăх республикин искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, хăйĕн арăмĕн Л. И. Жуковская художникăн эскизĕпе усă курса туса лартнă.

Чăваш çынни...
Çĕрӳ-и хĕсĕк
Е чап пухасшăн эс ютра,
Е тавракурăму сан пĕчĕк,
Шăп çавăнпа телей шыран?

Çитмен кĕтес эс хăвармастăн,
Қаятăн Сахалин таран:
«Эп лăпкă пурнăç шырамастăп,
Пулам,—тен,—буксирпа пĕр тан»*.

Асри Петров!
Епле сăпайччĕ,
Епле пĕлетчĕ ĕçлеме.
Хĕрӳленсе çитсен калатчĕ:
«Эп çăкăра ахаль çĕртмен...»

Янрать те «Савнă ялăмра»**—
Чуну пăчăртанса ыратĕ.
Çак юррăн тунсăхлă хăвачĕ,
Шанатăп: вилмĕ пурнăçра!

Манми ятсем чылай Турханăн.
Çапах та вĕсенчен сумли
(Çук, тетĕп, иккĕленмелли)
Профессор Қокелĕм!
Вăл санăн!

Чăваш художникĕ! Пĕрремĕш
Искусство тӳпинче çиçен.
Мал ĕмĕтлĕ картинусен
Паян кунччен чакмасть пĕлтерĕш.

---

* А. Андреев (1937—1968 çç.) поэт сăввисен йĕрки. Вăл Сахалинта сарăмсăр вилнĕ.

** А. Петров композитор (1943—1988 çç.) Ю. Скворцов поэтпа çырнă юрă. А. Петрова Шупашкарта пытарнă.

«Профессор Кокелӗн ҫӗршывӗ» —
Калаҫҫӗ халь Турхан ҫинчен.
Эс — ӗмӗр-ӗмӗр пулӑн сывӑ,
Эс — ӗмӗр халӑх асӗнче.

* * *

Ҫак шухӑшпа тухатпӑр шӑппӑн
Профессорӑн музейӗнчен.
Шкулта халь вӗренмеҫҫӗ. Лӑпкӑ.
Ҫу ҫилӗ ачашлать питрен.

Чунра ҫирӗпленет ҫӗн шухӑш:
Хӑв халӑхушӑн пурӑнсан,
Сана вӑл манмӗ нихӑҫан.
Эппин, мала чӗн, пурнӑҫ-юхӑм!

*1978—1989 ҫҫ.*
*Турхан — Шупашкар.*

## ТУПМАЛЛИ

*Умĕн калани* . . . . . . 3
Пĕрремĕш пайĕ . . . . . . . 5
Иккĕмĕш пайĕ . . . . . . 31
Виççĕмĕш пайĕ . . . . . . 61
Тăваттăмĕш пайĕ . . . . . 97

*Для старшего школьного возраста*

**Николай Константинович Кушманов**

**КОКЕЛЬ**

Поэма

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *И. В. Алексеев*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. К. Егорова*
Корректор *А. А. Васильева*

ИБ 2646

Сдано в набор 23.09.91 г. Подписано к печати 21.01.92. Формат 70×90 1/32. Бумага общ. назначения. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 4,68. Усл. кр.-отт. 4,82. Учетно-изд. л. 5,2. Тираж 2500 экз. Заказ № 2034. Изд. № 46. «С» 18.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской Республики по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

6-25

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ